ЛКЧ К84.09(=Чув)
А23
Ч-43485

ЛК
Давыдова-
Анатри

ЯЛ БИБЛИОТЕКИ

№ 2



Леонид АГАКОВ

# ЕПЛЕ ТӲСЕТӖН-ХА КУЛМАСӐР?

Чӑвашгосиздат
Шупашкар—1960

Национальная библиотека ЧР
4-043485

А23

«ЯЛАВ» БИБЛИОТЕКИ № 2

Леонид АГАКОВ

# ЕПЛЕ ТӲСЕТĔН-ХА КУЛМАСĂР?

*Калавсем*

Юратнă тусăма,
В. И. Давыдова,
ырă кăмăлпа!

26/V-60. Л. Агаков

*ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ*
Шупашкар — 1960

2Рос(Чув)6-445 я 44.3
4.09(Чув)6-445

*ЛЕОНИД АГАКОВ*

*Леонид Яковлевич Агаков Етĕрне районĕнчи Çуткасси ялĕнчи учитель çемйинче 1910 çулхи апрелен 18-мĕшĕнче çуралнă. Ялти шкултра вĕренсе тухнă хыççăн Етĕрнери 2-мĕш сыпăклă шкула кайса кĕнĕ. (Кайран вăл шкултан педтехникум пуса хунă).*

*1928 çулта педтехникумран вĕренсе тухсан, тăвата çул хушши Шупашкарти редакцисенче ĕçленĕ, унтан Мускаври театр институчĕн литература факультетне кĕнĕ. Унтан вăл 1935 çулта вĕренсе тухна.*

*Çырма Л. Агаков техникумра вĕреннĕ чухнех пуçланă, унăн пĕрремĕш кĕнеки 1930 çулта тухнă. Çавăнтанпа, вăтăр çул хушшинче, вăл пурĕ 32 кĕнеке кăларнă.*

*Л. Агаков 1939 çулта Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи вăрçăра пулса аманнă. Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан та тӳрех фронта тухса кайнă. Кунта малтан стрелковăй рота командире пулнă, унтан ăна дивизи хаçатне ĕçлеме куçарнă. Вăрçăра пуханнă материалсемпе усă курса, вăл кайран чылай кĕнекесем çырнă.*

*1939 çултанпа Л. Агаков — СССР-ти писательсен союзĕн членĕ, 1943 çултанпа — КПСС членĕ.*

*Фронтра ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата медальсемпе наградăланă, вăрçă хыççăн литературăра тунă çитĕнӳсемшĕн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне панă.*

Проверено 14 АВГ 2017
И-43486

## ЁНЕНМЕСЕН — ПЫРСА КУРĂР...

*(Лавкка Лукки каласа пани)*

Такамран пуçланнă вăл, ăна пĕлместĕп, анчах та пирĕн ялта пĕр тĕлĕнмелле йăла пур: кам мĕнле ĕçпе пурăнма пуçлать, ăна наччас çавăн майлă ят парса хураççĕ. Тăрăхласкӳрентерес тесе мар, çук, ытти çынсем хушшинче паллă пулма параççĕ çав ятсене...

Итлĕр-ха акă, мĕнлерех ятсем пур хальхи вăхăтра пирĕн колхозра: Пăру Паруççи, Кирпĕч Кирули, Кĕнеке Кĕркури, Автан Алтатти, Радио Раманĕ, Трактор Трихванĕ тата ытти те. Хăвăрах пит лайăх чухлатăр пуль ĕнтĕ çав ятсем мĕнрен пулса тăнине: Паруççи пăру пăхать, Кирули кирпĕч çапать, Кĕркури кĕнеке вулаттарать, Алтатти чăх-чĕп ферминче ĕçлет,— чăх пулнă çĕрте автансăр пулмастех! — Раманĕ радио юрлаттарать, Трихванĕ тракторпа кĕрлеттерет! Нумай пулмасть тата пĕр хитре кăна сар качча Çутă Санькки теме пуçларĕç,— вăл пирĕн электротехник, ялти çутă хуçи...

Паллах, пурте вĕсем лайăх çынсем пирĕн, пурте хамăр ялсем тата. Хуть те мĕнле кăткăс ĕç сиксе тухсан та, эпир халь çав ĕçе тума пултаракан çынсем шыраса ютта каймастпăр, никама та тархасламастпăр, ни-ни! Теприсем, авă, пуртă аври ларттарма та ют яла каяççĕ, тет, мĕншĕн тесен хăйсен платникĕсем пурте аякра «калым» туса çӳреççĕ имĕш, анчах пирĕн пĕртте ун пек мар вара, çук. Платникĕ-тимĕрçи кăна мар, учителĕсем те веçех хамăрăн пирĕн, агрономĕпе зоотехникĕ те, хвершăлĕ те, шоферĕ-комбайнерĕ те. Ытти ялсенче темлерех пурне пĕлме çук, анчах пирĕн çавăн пек: кам ăçта та пулин вĕренсе тухать, вăл ецле пулсан та тăван ялнех таврăнса ĕçлеме тăрăшать, таврăнаймасан вара питĕ шутсăр кӳренет...

Мĕн каламалли, лайăх пурăнатпăр!

Мана хама акă Лавкка Лукки, теççĕ, мĕншĕн тесен эпĕ вунпилĕк çул ытла, мĕн вăрçăран таврăннăранпах ялти лавккара ĕçлетĕп ĕнтĕ, ял халăхне пурнăçра мĕн кирлĕ — çавсене

пур чухне те ытлăн-çитлĕн илсе килсе сутма тăрăшатăп. Илĕр, туянăр, тăвансем, ыр курăр! Лукка лавккинче пурте пур: кил таврашĕнчи хатĕр-хĕтĕр те — хуранĕ-куршакĕ, турчки-ухвачĕ, витри-кастрюлĕ; çие тăхăнмалли те — пальтти-костюмĕ, атти-пушмакĕ, кĕпи-йĕмĕ, çĕлĕкĕ-картусĕ; çимелли-ĕçмелли те — сахăрĕ-канфечĕ, премĕкĕ-печенийĕ, тем те, тем те! Укçуна çеç кирлĕ таран илсе пыр та ăна ытлашши хĕрхенсе хытса ан тăр!

Укçи пирки калас пулсан, ӳпкелемеллиех çук вара — укçа тени пур пирĕн халăхăн! Пур! Ăна эпĕ, Лавкка Лукки, сирĕнтен пуринчен те лайăхрах пĕлсе тăратăп, мĕншĕн тесен çынсем хăйсен ĕçлесе тупнă укçи-тенкине чăн малтан ниçта та мар — ман патăма, лавккана илсе пыраççĕ вĕт-ха. Халăхра укçа çуллен-çул ытларах пулса пынине те эпех куратăп,— ăна манăн лавккари тавар çаврăнăшĕ ӳснĕçемĕн ӳсни чи чаплă тĕкĕртен те хитререх кăтартать.

Тата тепĕр япала пур ăна палăртаканни.

Тен, эсир асăрханă та пуль: суту-илӳре ĕçлекенсем «ассортимент» сăмаха питĕ юратаççĕ. Пире ятланă чух та, мухтанă чухне те çав сăмаха пĕрмай асăнаççĕ. Пухусенче, канашлусенче ялан илтетĕн вара:

— Иванов начар ĕçлет, унăн ассортимент пĕчĕккĕ! Епле намăс мар ăна?!

— Петровран пример илĕр, унăн ассортимент çав тери пысăккă!

Ăнланмалларах каласан, çак сăмах вăл лавккара тĕрлĕрен тĕрлĕ таварсем нумай пулмаллине пĕлтерет. Лавккара таварсен ассортименчĕ çуллен сарăлса пыни халăхăн ыйтăвĕ пысăкланнине, вăл пуянланса пынине кăтартса парать...

Астăватăр-и эсир, ĕлĕк чух, авалхи саманара, пирĕн ял çыннисем лавккара мĕн илнĕ? Тăвар илнĕ вĕсем. Кăштах краççын. Эрнере пĕр коробка спичка. Виç-тăват çулта пĕр хуран. Ну, тата кăшт-кашт çавăн пек япаласем...

Анчах халь мĕнле тетĕр эсир? Ман лавккара халь пилĕкçĕр йышши тавар пур. Пи-лĕк-çĕр! Ĕненместĕр-и? Ара, пырса курăр эппин апла пулсан! Йĕппе çипрен пуçласа «Октава» радиоприемникпе мотороллер таранах туянма пултаратăр ман патра. Кирлех пулсан, «Москвич» та туянтарма пултаратпăр. Анчах пирĕн çынсем ăна та çителĕксĕр теме пăхаççĕ-ха...

Мĕнрен килет вăл? Ăнланатăр-и çакна?

Халăх укçаллă пулнинчен, вăл халь хăйне валли лайăхран лайăхрах япаласем туянасшăн пулнинчен тата вĕсене ним мар туянма пултарнинчен килет!

Пырса курăр-ха эсир уяв кунĕсенче пирĕн хĕрсемпе каччăсене! Мĕнлерех тумланаççĕ вĕсем? Хĕрсем çинче — пурçăн та

штапель, урисенче çут пушмак та фельдиперс чăлха, нумайăшĕн — капрон. Каччисен костюмĕсем пурин те тенĕ пекех коверкот та шевиот, механизаторĕсем вара пĕри те «метро»-ран кайине тăхăнмаççĕ.

Тата çамрăксенчен пĕри те çуран çӳресшĕн мар. Пурте велосипедсемпе чупаççĕ, хăшĕсем ĕнтĕ моторлисене туянчĕç. Ман лавккана хурал тăракан Хумма мучи кун пирки пĕррехинче питĕ тĕрĕс каларĕ:

— Ĕлĕк чух, çемьере каччă пулсан, вăл авланнă тĕле епле те пулин вăй çитерсе тăрантас туянма тăрăшатчĕç,— терĕ вăл,— анчах халь пур — тавай вĕсене çуран урапа е циккăл-миккăл... велосипед та мотоцикл эппин...

Çамрăксем çеç-и! Ватăраххисенчен те халĕ никам та килти пиртен çĕленĕ кĕпе-йĕм тăхăнмасть вĕт. Çитсă пар та вĕсене, сатин тăхăнтарт!

Акă, эпĕ юриех çырса пытăм: виçĕмçул эпĕ 170 мăшăр атă-пушмак, 52 костюм, 33 велосипед сутсаттăм. Пĕлтĕрхи оборот унтан чылай ытлрах пулчĕ. Анчах кăçал вара вунă уйăх хушшинчех 420 мăшăр атă-пушмак, 122 костюм, 71 велосипед тухса кайрĕ ман лавккаран. Çитсă, штапель, пурçăн, аялтиçиелти кĕпе-йĕм, чăлха-носки мĕн чухлĕ сутни çинчен каламастăп та ĕнтĕ, вĕсен шучĕ те çук! Диаграм туса кăтартас пулсан, процентсем çивĕч пăрçасем пекех çӳлелле сиксе каймалла çав...

Ара, уй хуралçи Митюк мучи пулса вăл та велосипед туянчĕ вĕт кăçал çуркунне, ват супнă тĕлĕнтермĕш!

— Çитет кун чухлĕ çуран çӳренипе,— терĕ вăл укçине шутласа панă чух.— Патша самани мар халь çуран танккама, неччу!

Кăвак сухалне ик еннелле варкăштарса кăна çӳрет халь уйсем тăрăх, пыр та кур эс ăна...

Çынни эпĕ суйма-мухтанма юратаканскер мар, çавăнпа та сире тĕп-тĕрĕссине калатăп: вунпилĕк çул хушшинче мана никам та «япăх ĕçлетĕн», «халăхшăн тăрăшмастăн», тесе каламанччĕ, жалобăсем те çырман ман çинчен, анчах пĕлтĕрпе кăçал, ним тунмасăрах калатăп, самаях хаяр сăмахсем илтме тӳр килчĕ. Мĕншĕн, тетĕр-и? Нимĕншĕн те мар, çав ассортиментшăнах. Еплерех çунтарма тытăнчĕç-ха тата, тӳссе кăна гăр!..

Пĕлтĕр, Октябрь уявĕ умĕн, пирĕн колхоза çутă кĕртрĕç. Ну, урăхла каласан, электричество пачĕç. Тăватçĕр хĕрĕх кил пĕр харăс ялт! çутăлса кайрĕ. Урам хушшисенче те, фермăсенче те, пур çĕрте те кăнтăрлахи пекех çап-çутă пулса тăчĕ.

Ой, савăнчĕ те вара уншăн пирĕн халăх!

Анчах маншăн, Лавкка Луккишĕн, хурлăх кăна пулса тăчĕ вăл.

Çутă панă хыççăн ик-виç кунтанах лавккана фермăри хĕрсем чупса пырса «штурмлама» тытăнчĕç. Пĕр-пĕрине пӳлсех заказсем параççĕ мана:

— Лукка пичче, тепре тавар патне кайсанах электроутюгсем илсе килнĕ пултăр пире валли! Кашнинчех кăварпа хĕртсе аппаланма питĕ чăрмавлă, ăна валли вăхăт та çук пирĕн...

— Шупашкарта электричествăпа çавăрттармалли çĕвĕ машинисем нумай, тет, çавсенчен пĕр вуннăшне те пулин туянса кил-ха. Тем пекех тав тăвăпăр сана, качча кайнă чух кĕрекене, атте-аннепе юнашар лартăпăр...

Пĕлетĕп-ха, хăйсен пурин те алăпа çавăрмалли машинсем пур, анчах ку çитмест вĕсене, халь-теппер электричествăпа çавăраканнисене пар! Вăт, пулать те халăх!

Кăшт тăхтарахпа ваттисем те пыма тапратрĕç:

— Кунне виç-тăват хутчен вучах чĕртсе тăнранах каяс пулать, тата вутти те нумай кирлĕ, çавăнпа та эсĕ пире çав электроплитка тениие туянтар-ха часрах!

— Кĕпе çумалли машинсем те пур темеççĕ-и? Сĕтĕрсе килха пĕр виççĕшне те пулин! — йăлăнчĕç нумай ачаллă арăмсем.

— Пире сĕтел çине лартмалли лампочкăсем кирлĕ, ачасен тетрачĕсене тӳрлетсе ларма питĕ ансат вĕсемпе,— терĕç учительсем.— Электробритвăсем пулсан та кансĕрлемĕччĕç...

Правлени урайне шăлакан Укахви те пырса анратма тытăнчĕ:

— Халь пур çĕрте те механизаци пулмалла, илсе килсе пар мана пылесос!

— Ай-уй,— терĕм çакна,— ку сăмаха ăçтан илтрĕн эсĕ?

— Пĕркунне хуларан килнĕ лектор каласа хăварчĕ,—тет...

Заказ хыççăн заказ параççĕ: пĕри электрочейник ыйтать, теприне кукăль пĕçермелли «асамлă кăмака» кирлĕ, ялти ватă медсестра холодильчик пирки пĕлме хушрĕ. Эпĕ, паллах, никама та кӳрентермерĕм, вăл йăла çук манăн, пурне те: тупатпăр, илсе килетпĕр, терĕм, анчах та хам йăпăр-япăрах нимĕн те тупса параймарăм. Райсоюз складĕнче темиçе çул ĕлĕкрех илсе килнĕ пӳрне хулăнăш тутăхпа витĕннĕ çатмасемпе чугун куршаксем кăна купаланса выртаççĕ. Чăвашсоюзпа тĕрлĕ торгсен базисене илсе пынă электроприборсем — холодильниксем, «асамлă кăмакасем» тата ыттисем те нумай чух хулари магазинсене те çитеймеççĕ иккен, тӳрех палланă çынсен хваттерĕсене куçса лараççĕ.

Темисе хутчен те кайса вăрçрăм унта-кунта, мĕншĕн тесен ялта мана хама хытăран хытă çунтарма тытăнчĕç...

— Тăрăшмастăн! Эпир ыйтнисене юри илсе килместĕн! Сана эрехпе сутă туса пултăр!..

Чылай тăрăшма тиврĕ, çапах та пĕр çулталăк хушшинче хăтăлтăм-хăтăлтăмах хама ятлассинчен! Кама мĕн кирлине пурне те тупса патăм. Анчах пĕрине лайăх япала тупса паратăн çеç — тепри ыйтма пуçлать. Уншăн тăрăшма тытăнатăн вара...

Мĕн каласси пур, нумай хатĕр-хĕтĕр, нумай тавар ыйтать ку чухнехи ял! Тем те илесшĕн, тем те туянасшăн пирĕн çынсем. Йывăрланчĕ лавкkaçăсен ĕçĕ, пĕртте ĕлĕкхи пек мар. Кашни эрнерех тавар патне каятăн, машинĕ-машинĕпе тиесе пыратăн, çапах та тепĕр чух таварĕ çителĕклĕ пулмасть.

— Мĕншĕн, тетĕр-и?

Лайăх пурăнатпăр, акă мĕншĕн!

Мана ĕненместĕр пулсан, хăвăр ялти лавкkaçăран ыйтăр, вăл та сире çавнах каласа парĕ.

Çапла, тăванăмсем!..

## ЕПЛЕ ТУСЕТĔН-ХА КУЛМАСĂР?

*(Фельетонист çырса пынисенчен)*

Хăвăрах пĕлетĕр пулĕ: хаçат-журналсенче ĕçлекенсен тăтăшах çул çӳреме тивет. Матроссен пĕр юрринчи пекех вĕсен пурнăçĕ — нынче здесь, завтра там... Паян кунта, ыран унта. Кунсăр ниепле те май килмест çав — пур çĕре те çитмелле, пурне те курмалла, пурин çинчен те пĕлмелле те... пурне те пĕлтермелле.

Ĕçĕ çавă вĕсен!

Паллах ĕнтĕ, темĕн тĕрлĕ çынсене те тĕл пулатăн çул çинче çӳренĕ чух, темле интерес те илтетĕн вĕсенчен. Лайăххине те, усаллине те. Тарăхмалли те, кулмалли те пулать. Тĕрлĕренех!

Кунта эпĕ çавăн пек унта-кунта çӳренĕ чух илтнĕ хăшпĕр историсем çинчен каласа парасшăн-ха сире.

### 1. Ах, çав хальхи ача-пăча!

Çак сăмахсене Виççырма çыннисем хальхи ачасене хурласа мар, çук, пачах урăхла, вĕсене чунтан ырласа калаççĕ, тет.

Ун çинчен мана çак ялти клуб заведующийĕ Андрей Иванч Мазяков, кăмăллă та кăшт хăюсăртарах çын, иртнĕ çулла Атăл леш енчи канмалли çуртра пĕрле пурăннă чух каласа кăтартрĕ.

— Пирĕн Виççырма ялĕ виçĕ çырма пĕрлешнĕ тĕлте ларать,— терĕ вăл.— Шутсăр тарăн çав çырмасем. Çыр хĕрринчен

аялалла пăхсан пуç çавăнса каять, кĕç-вĕç кутăн чикеленсе каяссăн туйăнать, аялтан çӳлелле пăхсан — ху таçта çĕр тĕпне анса тăнă пек туятăн, икĕ çыран хушшинчи пĕлĕт çĕтĕк кăвак саппун пек çеç курăнать... Ĕлĕк-авал çак çырмасенче сĕм вăрман кашланă, унта арçурисем, шуйттансем тата ухмахсене хăратма шухăшласа кăларнă ытти çавăн пек выльăх-чĕрлĕхсем ашкăнса пурăннă, теççĕ. Унтан вăрманне касса пĕтернĕ те, сав чĕрчунсем кунтан тухса тарнă пулмалла. Çара çырмасем пĕрмай ишĕлсе, сарăлса пычĕç, çавăнпа та эпир темиçе çул каялла пĕтĕм колхозĕпе тухрăмăр та унта темĕн тĕрлĕ йывăç лартса тултартăмăр — çӳçе, çирĕк, йăмра, хурăн, вĕрене... Çырансем ишĕлсе сарăлма чарăнчĕç, çырмасенче авалхи пекех «сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман» пулса тăчĕ...

Мухтанмасăрах калатăп, питĕ селĕм вăрман лартса ӳстертĕмĕр çав çырмасенче! Хăшпĕр ӳсĕрсем пырса кĕрсен çухалса кайни те пулнăччĕ унта. Шутпа, халĕ пирĕн вăрмана арçурисем те таврăнма пултарнă ĕнтĕ, анчах вĕсем комсомолецсен вăрманне пыма тытăнарах тăчĕç пулмалла — сасси илтĕнмерĕ.

Анчах арçурисемпе шуйттансем вырăнне çакăнта пĕррехинче... турамăшĕ пырса вырнаçнă иккен. Хăех мар ĕнтĕ, унăн сăнĕ пырса выртнă!

Йĕркипе калас-тăк, ĕçĕ-пуçĕ çапла пулчĕ.

Варринчи çырма тĕпĕнче, Арçури варĕ тенинче, çăлкуçĕ пур. Шутсăр лайăх çăлкуç. Шăнкăртатсах юхса выртать. Хĕлле те шăнмасть хăй. Шывĕ вара — ача куççулĕ пек таса, ĕçсе тăранмалла мар! Çуллахи чи шăрăх кунсенче эпир юриех çавăнтан шыв ăсса килетпĕр, ма тесессĕн ăшчике пит лайăх кантарать вăл. Эрех-сăра тулккине пĕлекенсем те унти шыва «столичнăй» тесех ят панă. Колхоз бухгалтерĕ Прокоп Прокопч, ялан шӳт тума юратакан çын, çуллахи вăхăтра çав шыва «столичнăй» кĕленчинех тултарса сĕтел айĕнче усрать...

— Ах, пыр типсе ларчĕ-ха, пĕр çĕрĕшне çавăрса хурас пуль,— тет те вара, çав кĕленчене туртса кăларать.

Анчах элĕ кăштах аяккалла пăрăнса кайрăм-ха.

Пĕлтĕр çулла çанталăк пĕр хушă питĕ шăрăх тăчĕ. Курăк та типсе ларма пуçларĕ, кăнтăрла пахчасенчи купăста-хăяр çулçисем те шанса каятчĕç.

Шăп çав вăхăтра ялта çакăн пек хыпар сиксе тухрĕ: Арçури варне темле майпа ялти Шĕвĕр Мари тенĕ пĕр хĕрарăм пырса тухнă. Колхозăн кайăк ферминче ĕçленĕ чух хур-кăвакал вăрланăшăн пĕр çулталăк, сăмакун юхтарса сутнăшăн тепĕр çулталăк тĕрмере ларса тухнă пулин те, турра питĕ ĕненекенскер вăл. Чан сасси илтсенех чиркĕве тухса чупать. Чиркӳ праçникĕсем вăхăтĕнче вара пупсене пулăшма çĕр

выртмаллах каять, анчах унта вăл мĕн тунинех пĕлместĕп: ирсерен чечук хваттерĕнчен вăрă пек унăн-кунăн пăхкаласа тухса шăвăнать, тенине çеç илтнĕ.

Хайскер, çав Шĕвĕр Мари Арçури варĕнчи çăлкуç патне пынă пулать те — çăлкуçĕнче турă амăшĕн вĕрçĕнĕ патречĕ йăлтăртатса выртнине курах каять.

— Эй, турă чури Мари, эсĕ ман ятлă пулнипех сана ангелсем ман патăма килме хушрĕç пулĕ! — тесе каларĕ тет çав патрет.— Эпĕ хĕрĕх çул ытла çĕр айĕнче выртрăм, анчах халĕ çăлкуçĕнчи тăрă шыв мана çут тĕнчене юхтарса кăларчĕ. Мана ил те часрах турă çуртне, таса чиркĕве кайса пар. Мана кĕлтăвакансен çылăхĕсем каçĕç, чирлисем сывалĕç, асапланакансем ырă курса пурăнма пуçлĕç!..

Мари çавăнтах турамăш Мария патретне (ну, урăхла каласан — иконăна ĕнтĕ) йăтать те тӳрех чиркӳ патнелле ыткăнать, пачăшкăна шыраса тупса ăна тыттарать. Лешĕ, ӳсĕртерех пулнă пулин те, Мари çине темиçе хут хĕрес хурать:

— Эй, турă чури Мари! Санпа турă амăшĕ хăй калаçрĕ пулсан, эс вилсессĕн тӳрех рая каятăн! Ку турăш—пирĕн турра ĕненекенсемшĕн савăнăç та пулĕ, вĕсене вĕçĕмсĕр телей кӳрĕ! Часрах кун çинчен пурне те пĕлтерес пулать. Ан ӳркен, пур çĕре те çит, пурне те систер, çĕнелнĕ турăш тупăнчĕ, те...

Ну, пуçланса кайрĕ те çакăн хыççăн асар та писер шăв-шав! Ăçта ан пыр — карчăксем пĕр çавăн çинчен çеç калаçаççĕ.

— Арçури варĕнче çĕнĕ турăш тупăннă...

— Çветтуй икона! Турă амăшĕ, таса Мария, Христос амăшĕ аннă пирĕн пата!

— Ахальтен мар ку, ахальтен ма-ар! Пулатех мĕн те пулин, кĕтсех тăр!

— Ара, курмастăр-им, хăçантанпа çумăр çук! Выçлăх пулать пуль кăçал...

— Ниушлĕ вара турă амăшĕ сиен тăвать пуль пире?

— Пуççапас пулать ăна, кунĕн-çĕрĕн кĕл туса çылăхсене каçарма ӳкĕтлес пулать!

Малалла мĕн пулнине тавçăрса илме йывăрах мар. Чиркӳ тăрринчи çурăк чан кашни кун чанклатма тытăнчĕ, кашни кун икшер хут кĕлле кĕреççĕ. Амвон çинчен пачăшкă проповедьсем калать — çапла та çапла, пирĕн патра асамлă турамăш тупăнчĕ, ăна пире турă хăй пиллесе панă, тет.

— Пăхăр-ха, епле таса, хĕвел пекех çутă турамăшĕн сăнĕ! Анчах та вăл хĕрĕх çул çĕр айĕнче выртнă вĕт-ха! Пуç çапăр ăна, кĕл тăвăр, ун умĕнче çылăхăрсене каçарттарăр! Ун ячĕпе чиркĕве пулăшăр!

Малтанхи вырсарникунах «çĕнĕ турамăшне» йăтса, чиркĕ-

ве пуханнă карчăксемпе стариксене Арçури варне илсе кайса молебен тăваççĕ. Темĕн чухлĕ çамрăк йываççене амантса пĕтернĕччĕ, эсрелсем! Каялла тавăнсан, кадилăсене йăсăрлантарса, виçĕ хутчен чиркӳ тавра çаврăнаççĕ, Шĕвĕр Мари пеккисем çав вăхăтрах вĕçĕмсĕр укçа пухаççĕ.

— Таса турамăшĕ ячĕпе, çĕнелнĕ турăш ячĕпе!

Кайрĕ пурнăç пачăшкăсен! Унччен чиркĕве пысăк праçниксенче те пĕр 30—40 çын çеç пыратчĕç, тет, халĕ вара, Арçури варĕнче «çĕнĕ турăш» тупнă хыççăн, айвансен йышĕ çав тери ӳссе кайрĕ. Хыпарне сарма пĕлнĕ ĕнтĕ чиркӳ çыннисем, çавăнпа та «асамлă турă амăшне» пуç çапма ытти районсенчен те пыма пуçларĕç.

Унччен пачăшкăпа чечук кивелсе кайнă рясăсемпе, чалăшнă кĕлĕллĕ атăсемпе кăна çӳретчĕç, халĕ вара иккĕшĕ те туй ачисем пек якалса кайрĕç. Тумтирĕсем вĕр-çĕнĕ, йăлтăртатса кăна тăраççĕ, урисенчи хром сăран атăсем чĕрик! чĕрик! чĕрик! тăваççĕ, сăнĕсем çăмарта пек çавракаланчĕç, пачăшкăн хырăмĕ те мăкăрăлса тухма пуçларĕ. Ку çеç те мар-ха: пĕр тăватпилĕк уйăхран пачăшкă хăй валли петтистеннăй пӳрт лартрĕ, унтан «Победа» илсе ячĕ вĕт! Шофер та тытрĕ!

Анланаканнисем кулчĕç:

— Питĕ вăйлă пулăшать çĕнĕ турамăшĕ пирĕн пачăшка, калама та çук!

— Турăшне Арçури варне кайса пăрахни ахаль пулмарĕ! Пĕлнĕ вĕсем мĕн тусан мĕн пулассине!..

Паллах, ку вăхăтра эпир, культура фронтĕнче ĕçлекенсем, алăсене усса, çăварсене карса лармарăмăр, тĕн сĕрĕмне хирĕç лекцисем, калаçусем ытларах ирттертĕмĕр, халăх хушшинче тĕрлĕрен «чудосем», «çĕнелнĕ турăшсем» мĕнле пулса тăни çинчен калакан кĕнекесем сарма тăрăшрăмăр, анчах Арçури варĕнчи турамăшĕ çаплах-ха ĕненекенсене хăй патнелле туртрĕ. Мĕн тăвас тетĕн, тĕн сĕрĕмне труках сирсе яма çук! Йывăр чир вĕт вăл.

Пурана-киле, çăварни тĕлĕнче, ялта сасартăк тепĕр хыпар сарăлчĕ: пачăшкăпа чечук пĕр-пĕрине çав тери хытă хĕнесе тăкнă, терĕç. Чечукĕн менелник пулнă имĕш. Унта пачăшкăпа матăшкă, чиркӳ старости тата таçти урăх прихутран пынă тепĕр чечукпа хайхи Шĕвĕр Мари пулнă. Ну, хăвăрах пĕлетĕр. менелник тени сыпмаллисĕр пулмасть. Çаксем те какăриччenex, пĕр-пĕрине паллами пуличченех ĕçсе лартнă. Ара, укçи нумай та-ха, турра ĕненекенсен кĕсйинчен кусен кĕсйинелле шыв пекех юхса тăрать те-ха. Ĕçе-ĕçе картаран иртсен, юрласан-ташласан, менелник тăваканни, чечукĕ ĕнтĕ, сасартăк пачăшкăпа староста çине сиксе ӳкнĕ.

— Çапах та жулик эсӗ, Варсонофи атте! Эсӗ те жулик, староста! — кӑшкӑрма тытӑнчӗ вӑл.— Эсир иксӗр те ман юна ӗçсе пурӑнатӑр. Тупашсене яланах манран пытарса валеçетӗр, хӑвӑра çӗклемӗпе илетӗр, анчах мана ик пӳрне витӗр кӑтартатӑр! Тӑрӑ шыв çине кӑларатӑп ак эп сире!...

— Çӑварна хуп, анафема! -- кӑшкӑрнӑ ӑна хирӗç пачӑшкӑ.

— Кам анафема? Эпӗ-и?! — тата ытларах вӗресе кайнӑ чечук.

— Эсӗ çав, кам пултӑр тата? — пачӑшкӑ майлӑ пулса урипе тапнӑ староста.

— Аха-а! Эсир халь кун пек калаçатӑр-и? — Чечук пӗррех сӗтел çине чышкипе чанлаттарнӑ.— Анчах кам пуйтарчӗ сире?! Калӑр, кам пуйтарчӗ çав тери? Иконне кам çӗнетрӗ? Арçури варне кам кайса хучӗ? Турамӑшне тупса килме Маруçа кам хушрӗ, мӗн каламаллине кам вӗрентрӗ, эпӗ-и, эпӗ мар-и? Эпӗ, Фонифатий чечук!..

— Анчах сана хӑвна кам вӗрентрӗ ун пек тума? — мӗкӗрсе янӑ пачӑшкӑ.— Санӑн хӑвӑн ӗмӗрне те ӑс çитес çукчӗ-ха, мӗскӗн кӗлмӗçӗ: Хуп шӑршлӑ çӑварна, антихрист!..

— Эпӗ мар, эсӗ вӑл антихрист! Жулик, вӑрӑ! Мана улталаса пурӑнатӑн, ху пуясшӑн çеç тӑрӑшатӑн, мӑнтӑр сысна!

— Эсӗ ху сысна! Чух-чух!

— Ха, эсӗ манран хамӑн килтех мӑшкӑлласшӑн тем? Акӑ, эп сана пӗрре...— Çавӑнтах пӳртре акӑш-макӑш тӳпелешӳ пуçланса кайнӑ. Тӗпӗр-тепӗр, кӗмсӗрт-кемсӗрт, нӑч-нач!

Чечукӗ пур алӑксене те урлуççисем ярса питӗрнӗ пулин те, чӳречисене утиялсемпех картланӑ пулин те, çак çапӑçу çинчен пӗр-ик кунтан пурте пӗлчӗç.

— Ара, хайхи Арçури варӗнчен пынӑ турамӑшӗ çветтуй аттесене çапӑçтарса янӑ вӗт!..

— Пачӑшкин сӑмси катӑлнӑ, тути çурӑлнӑ, тет, чечукӗн хӑрах куçӗ сиксе тухнӑ, тет, старости вӗсене чарма тӑрса хушша кӗрсе кайсан, лешсем ун çине сиксе ларса малти шӑлӗсене пӗрре те хӑварман, тет. Вӗсен йӗкехӳрине, Шӗвӗр Марине те самаях паркаласа илнӗ пулас, куçӗ-пуçӗ кӑн-кӑваках, теççӗ...

— Укça çавӑн пек вӑл, ытлашши нумай пулсан çынна ахӑрттарсах ярать!

Çавӑн пек калаçрӗç ял хушшинче...

Анчах çав чечук менелникӗнче çакнашкал «батали» пулса иртнине халӑх мӗнле пӗлме пултарнӑ? тетӗр ӗнтӗ эсир. Кайран хӑйсем каласа панӑ тӑрӑх пӗлнӗ, тетӗр-и? Асту, калаççӗ пуль! Кама та пулин систерме мар — ун çинчен пачӑшкӑпа чечук та, старостӑпа Шӗвӗр Мари те пӗр сӑмах та каламарӗç, хӑйсем хушшинче ним пулман пекех пытарчӗç — шӑпӑрт пулчӗç!

Çапăçу мĕншĕн тапранса кайнине, уйрăмах тата чечук турăшĕ хăй «çĕнетни» çинчен кăшкăрнисене чиркĕве çӳрекенсем пĕлсен, вĕсен пĕтĕм «коммерцийĕ» пĕтсе ларма пултарнă вĕт-ха!

Çакна ăна чăн малтан пирĕн шкул ачисем — çиччĕмĕш класра вĕренекен Çимукпа Тимук пĕлнĕ. Çав каçхине вĕсем ял хуралçисем пулса урамсем тăрăх шăкăрчак шăкăртаттарса çӳренĕ. Йăли çавăн пек пирĕн — каç-каç хуралта черетпе пулаççĕ. Малтан çак ачасем шкулта вечерта пулнă, унтан тухнă та ерипен тăвалла уттарнă. Чечук пурăнакан пӳрт тĕлне çитсен, шалта хытă шавланине илтех каяççĕ. Мĕнле япала ку? Чиркӳ çыннисен укçа нумайине пĕлсе, кам та пулин çаратма пыман-и? Часрах чӳрече патне пырса тăраççĕ те шалта акăшмакăш юрланине, ташланине илтеççĕ.

— Ĕçкĕ вĕт кунта! Ниушлĕ Фонифатий авланма шут тытнă? Ытлашши çамрăках та мар-çке вăл? — тĕлĕнеççĕ çамрăк патрульсем.

Унтан чечук çухăрашма тапратать. Лăпкăн çывăрса кайнă ялта нимĕнле сас-чĕв те çуккипе пӳртре мĕн кăшкăрни урама питĕ лайăх илтĕнет. Ачасем хăйсен хăлхисене мулкачсем пекех чăнк! тăратаççĕ. Ӳсĕр пуп таврашĕсем мĕн çинчен шавлама пултарни питĕ интереслĕ-çке вăл!..

Итлеççĕ-итлеççĕ те çаксем пĕтĕмпех ăнланаççĕ: хайхи çĕнĕ турамăшĕ кӳрекен тупăшран чечука укçа сахал лекет иккен, вăл çавăнпа ӳпкелешет, анчах турăшне вăл хăй «çĕнетнĕ»-мĕн. Ăна Арçури варне кайса пăрахма та хăех хушнă! Чăн та ĕнтĕ, çавăн пек тума ăна малтан пачăшки вĕрентнĕ, анчах ĕçне тăваканни чечукпа Шĕвĕр Мари пулнă...

— А-ав епле фокус-покус иккен кунта! — чĕлхисене чакластарса илнĕ те Çимукпа Тимук тепĕр ирхине кун çинчен хăйсен шкулти юлташĕсене пĕтĕмпех каласа кăтартнă.

Кайрĕ вара ял тăрăх хыпар! Килтен киле, урмран урама...

Анчах та ку ĕçĕн пуçламăшĕ кăна пулчĕ-ха.

Эпир çав кунсенче хамăр клубра шăпах концерт лартма хатĕрленеттĕмĕр. Пĕр каçхине, репетици ирттернĕ чух, ман пата хайхи ачасем, Çимукпа Тимук, пырса кĕчĕç.

— Концерт программине пире кĕрт-ха,— теççĕ çаксем.

— Мĕн пур вара сирĕн халăха кăтартмалли? Юрăсем-и, ташăсем-и?

— Эпир фокус кăтартма хатĕрлентĕмĕр.

— Мĕнле фокус?

Ачасем пĕр-пĕрин çине пăхрĕç те именнĕ пекрех кулса илчĕç.

— Икона çĕнетсе кăтартатпăр. Халăхшăн питĕ усăллă пулать вăл...

Ачасем мĕн шухăш тытнине эпĕ тӳрех ăнланса илтĕм те — концерт программине çавăн пек «номер» кĕртме пĕр сăмахсăрах килĕшрĕм.

— Астăвăр, намăс курмалла ан пултăр! — тесе асăрхаттартăм çеç.

— Ан хăра, Андрей Иванч,— терĕç ачасем,— эпир шкулта хими вĕренетпĕр вĕт! Фонифатий чечукран каях юлмăпăр! Темисе опыт та туса пăхрăмăр ĕнтĕ, питĕ лайăх пулса тухать!

Хайхискер, пĕр шăматкун каçхине клубра пысăк концерт пуласси, унта ытти номерсемпе хутăш «индийски фокус» кăтартасси çинчен пĕлтертĕмĕр. Яланхи пекех клуба халăх лăках тулчĕ. Арçынĕ, хĕрарăмĕ, ватти, вĕтти.

Пуçларăмăр...

Малтан пĕчĕк спектакль пулчĕ, иккĕмĕш пайĕнче — юрă-сăвă, ташăсем, акробатика. Анчах çынсем урăххине кĕтрĕç...

— Фокус хăçан пулать?

— Тавай, фокус кăтартăр! — кăшкăрма пуçларĕç унтан та кунтан. Хăшĕсем урисемпе те тăпăртатса илчĕç.

— Фоку-ус!..

Мĕн тăвас тетĕн халăхпа? Ирĕксĕрех программăри номерсене улăштарса лартма тиврĕ. Пирĕн «фокусниксем» — Çимукпа Тимук — сцена хыçĕнче тахçанах хатĕрленсе тăнăччĕ ĕнтĕ, уншăн хăрамалли çукчĕ.

Чаршав умне тухрăм та шавлакан халăха хыттăн кăшкăрса пĕлтертĕм:

— Халĕ сире пирĕн пата юмахри çĕршывран килнĕ факир Шарлатан Балдайпа унăн помощнике Халтур-бей хăйсен фокусĕсене кăтартаççĕ!

— Шапăр-шапăр-шапăр! алă çупса ячĕ залри халăх. Саваннипе пулас, тахăшĕ ши! ши! шăхăрса илчĕ.

Кĕç чаршав уçăлчĕ. Сцена варринче йăрăм-йăрăмлă пусмапа витнĕ пĕчĕк кăна сĕтел тăрать, ун çине темиçе пуçлă çĕлен ӳкерсе эрешленĕ ещĕк лартнă. Унччен те пулмарĕ, сцена çине Çимукпа Тимук вăркăнса тухрĕç — чăн-чăн факирсем пекех! Иккĕшĕ те сăрласа пĕтернĕ хулăн хутран тунă вăрăм халат пеккисем тăхăннă, пуçĕсем çинче — мyркаллă шĕвĕр калпаксем, янахĕсем çумне сӳсрен тунă тем тăршшĕ сухалсем çыпăçтарнă, пичĕ-куçĕсене сăрласа палламалла мар туса хунă...

Сцена хĕрринерех утса пырса аллисене çĕклерĕç те пуç тайса илчĕç:

— Салам-аликкĕм! Ырă каç пултăр ырă çынсене!

Халăх çăвара шыв сыпнă пек ларчĕ...

Çав самантрах Çимук такмаклапă пек калама тытăнса кайрĕ.

— Çитмĕл çичĕ уй урлă, утмăл ултă шыв урлă, çумăр витĕр, юр витĕр, çĕрĕн-кунĕн, канмасăр, сире чунтан юратса, çитрĕмĕр пит васкаса!

— Эпир ахаль çынсем мар — терĕ малалла Тимук,— эпир чăн-чăн факирсем, турра та ĕненместпĕр, шуйттанран та хăрамастпăр, ултавçăсене кураймастпăр, айвансене тăрăхлатпăр...

— Эсир фокусне кăтартăр!

— Такмаклама эпир хамăр та пĕлетпĕр!..— кăшкăрчĕç çав вăхăтра залран. Анчах Çимукпа Тимук çухалса каймарĕç, тӳрех хирĕç тавăрса хучĕç:

— Фокусĕ те пулĕ, сирĕн кăмăлăр та тулĕ!

— Пĕрисене намăс пулĕ, теприсен тухса каяс килĕ!..

Унтан вара вăрт çаврăнса сĕтел хыçне кайса тăчĕç те, сĕтел çинчи ещĕкĕн икĕ енче пĕр харăсах темĕн пысăкăш çулăмсем ялкăшса илчĕç. Çавна пула, нумайăшĕ шартах сикрĕç. Унччен те пулмарĕ, Çимук ещĕкрен хутпа чĕркенĕ пысăках мар тăваткал япала туртса кăларчĕ.

— Сан шутпа, çакăнта мĕн пытарнă? — ыйтрĕ вăл Тимукран.

— Пĕлместĕп.— пуçне пăркаласа илчĕ лешĕ.

— Уçса пăх-ха эппин...

Тимук çиелтен чĕркенĕ хутне сӳтсе пăрахрĕ.

— Темле хăма ку санăн... Кив хăма!

— Э-эх, хăвна ху факир-фокусник тетĕн, анчах санăн ăсу пĕр пуслăх та çук иккен! Аннӳ сана çуралнă кунах кăмака çинчен ӳкерне́ пулмалла. Ху чухлаймастăн пулсан, хамăра курма пухăннă халăха кăтарт-ха эппин ăна, вичкĕн куçĕсемпе пăхччăр, аллисемпе хыпашласа курччăр та çак япала мĕн иккенне каласа паччăр! — хушрĕ Çимук.

Тимук çавăнтах сцена хĕррине пычĕ те:

— Пăхăр-ха, тăвансем, çакă мĕскер вăл? — терĕ.

Ун патне харăсах темиçен чупса пычĕç те хайхи хăма таткине куçĕсемпе симе тытăнчĕç.

— Турăш ку! Икона! Турамăшĕ! — кăшкăрчĕç унтан.

— Чăнах-и? Улталамастăр-и? Атту халь вĕт турамăш ячĕпе улталакансем нумайланса кайнă, теççĕ...— пӳрнипе юнанă пек турĕ Тимук.

— Пур ун пеккисем! — кăшкăрчĕç залран.

— Ак ку вара турамăшех пулсан, каялла парăр-ха эппин! — Тимук хăма таткине илсе Çимука тыттарчĕ.— Ăçтан

тупрăн эс ăна, чаплă факир Шарлатан Балдай? Ăнсăртран, кунта килнĕ чух Арçури варне кĕрсе тухмарăн-и? Ку чухне турамăшсем унта та вырткалаççĕ иккен-ха!

Залри халăх лăх-лăх-лăх кулса ячĕ.

— Çук, Халтур-бей шăллăм,— терĕ ăна хирĕç Çимук,— ку турăша эпĕ хамăн асанне шупашки тĕпĕнче тупрăм, вăл унта çĕр çул ытла выртнă...

— Апла вăл питĕ ватă-çке!

— Ватă çав, питĕ шутсăр ватă! Куратăн — сăнĕ те пĕтнĕ, вуçех палăрми пулса ларнă. Эсĕ ху та уйăрса илеймерĕн авă. Çавăнпа та пирĕн иксĕмĕрĕн ăна халех çамрăклатас пулать, унăн сăнĕ каллех хĕр чухнехи пек çиçсе тăракан пултăр...

— Ăна çамрăклатни мĕн тума кирлĕ сана? Кайран Арçури варне кайса хурас теместĕн пулĕ-çке?

— Айван та иккен эсĕ, тусăм! Эпир жуликсем мар пулĕ ун пек хăтланма?

— Эппин, мĕн тума кирлĕ-ха вăл турăша çĕнетни?

— Музее кайса паратпăр. Унта авалхи турăшсене пухаççĕ, тет. Авалхи художниксен ĕçĕсене тĕпчесе вĕренме кирлĕ тет вĕсем. Ну, тата...çакăнта пухăннă халăха хамăр мĕн тума пултарнине те кăтартмалла пирĕн. Атту вĕсем эпир иксĕмĕр чаплă факир-фокусниксем пулнине те ĕненмĕç. Хамăртан кулса тăна кăларĕç. Анчах эпĕ хамран кулнине юратмастăп. Эп хам кулма юрататăп!

Çапла шÿтлесе калаçнă хушăрах Çимук сĕтел çинчи ещĕкрен темле эмел кĕленчисем кăлара-кăлара лартрĕ.

— Кусем мĕнле эмелсем санăн? — пĕлмен пек ыйтрĕ Тимук.— Таракан-хăнкăла пĕтермелли имçамсем мар пулĕ те?

— Тьфу! — тарăхнă пек пулчĕ Çимук.— Чăнах та санăн пуçна çуралнă-çуралманах автан сăхса шăтарнă пулĕ! Турамăшне çамрăклатмалли эмелсем вĕсем! Ак ку акă нашатырь спирчĕ, унта эпĕ кăштах скипидар янă. Ак ку — азот йÿçекĕ. Ĕненместĕн пулсан — шăршласа пăх..

Çимук эмел кĕленчисене сăмси патне илсе пычĕ те питкуçне çав тери килĕшÿсĕр пĕркелентерсе илчĕ.

— Вăйлă!..

— Халĕ ĕçе тытăнăпăр,— терĕ Тимук.— Ак çак кипке татăкне азот йÿçекĕпе йĕпететпĕр те турамăш питне-куçне çуса яратпăр. Куратăн-и, епле тасалать вăл? Пĕр тутăх та юлмарĕ. Халĕ тата нашатырьпе сăтăрăпăр... Епле пек? Тасарах пултăр тесе тата тепĕр хут çуса ярăпăр, эмелсене шеллемĕпĕр...

Турăш чăнах та çутăлнăçемĕн çутăлса пычĕ. Курса ларакансем кулма пуçларĕç...

— Пулчӗ! Çамрӑкланчӗ турамӑшӗ, вунçич çулхи хӗр пекех пулса тӑчӗ! — терӗ юлашкинчен Тимук. Вӑл иконӑна çӗклерӗ те пурне те курӑнмалла çавӑркаласа кӑтартрӗ.— Арçури варӗнче тупнинчен кая мар вӗт, э?

— Унтан та çамрӑкрах! — кӑшкӑрчӗ тахӑшӗ.

— Турӑшсене ялтӑртатса çутӑлакан тумалли ансатрах меслет те пӗлетпӗр эпир,— терӗ Тимук.— Малтан сухан пуçӗпе темиçе хут сӑтӑрмалла, унтан тип çупа çуса ямалла, вара хуть те мӗнле кивӗ турӑш та вӗр-çӗнӗ пулса тӑрать... Айвансене çавӑн пек улталасçӗ ӑна! Ӑнланатӑр-и халь?

— Ӑнланатпӑр! — кӑшкӑрчӗç темиçен пӗр харӑс.

— Фокусниксем пулма пултаратпӑр-и ӗнтӗ эпир?

— Пултаратӑр! Маттур! — алӑ çупрӗç ял çыннисем.

— Тавтапуç эппин сире! — маларах тухса пуçӗсене тайса илчӗç те Çимукпа Тимук хӑйсен хатӗрӗсене илсе сцена хыçнелле чупса кӗрсе кайрӑç. Халӑх нумайччен алӑ çупрӗ...

...Çавӑн хыççӑн Шӗвӗр Мари иртнӗ çулла Арçури варӗнчен йӑтса пынӑ турамӑшӗн пӗтӗм «хӑвачӗ» пӗтсе ларчӗ. Ӑна тек никам та ӗненмерӗ. Чиркӗве çӳрекенсем те çав тери сахалланса юлчӗç. Пурӑна-киле никам та юлмасть пулӗ-ха.

— Ах, çав хальхи ача-пӑча! Ытла та çивӗч-çке вӑл, теме те пултарать! — теççӗ Виççырма çыннисем ӑшӑ кӑмӑлпа.

## 2. «Эпӗ ӑна пушӑпа, пушӑпа!»

Ытла пур чух та машинӑпа ларса çӳреме май пулмасть вӗт-ха. Тепӗр чух лашапа та кайма тивет...

Çапла, пӗлтӗр çулла, чылай хушӑ çумӑр çуса тӑнӑ хыççӑн çанталӑк уяртсан, эпӗ пӗр колхозран тепӗр колхоза кайма тухрӑм та çул çинче машина тавраш кӗтсе илеймерӗм.

— Инçех мар, каçчен çитӗп-çке,— терӗм те вара çурранах утрӑм.

Анчах манӑн нумаях та утмалла пулмарӗ, хыçалтан пӗр ула кӗсре кӳлнӗ лав хуса çитрӗ. Пӑхатӑп, урапи çине темиçе сӗт бидонӗ лартнӑ, вӗсен умне пӗчӗкрех кӑвак сухаллӑ старик вырнаснӑ.

Эпӗ хама лартса кайма ыйтас та теменччӗ,— лавӗ пушӑ мар-çке-ха,— анчах çав старик тилхепине карӑнтарса лашине чарчӗ те хӑех сӑмах хушрӗ мана:

— Ӑсталла утатӑн, юлташ?

— «Шуçӑм» колхоза çитес пулать-ха.— терӗм эпӗ.

— Эппин, эс пирӗн пата пыратӑн? Эпӗ шӑпах «Шуçӑмран». Лар, пӗрле кайӑпӑр, иксӗмӗре те хаваслӑрах пулӗ!

— Тавтапуç. Анчах лашуна йывӑр пулмасть-и?

— Мĕн йыварри? Бидонĕсем пушă ман вĕсем, лар!
Эпĕ урапа хĕррине сиксе лартăм.
— Ху ăçта пултăн вара кун пек? — ыйтрăм старикрен.
— Колхоз ферминчи сĕте çу заводне леçсе таврăнатăп,— терĕ вăл.
Сăмах хыççăн сăмах. Паллашрăмăр. Чĕлĕм чĕртсе ятăмăр. Старик ку çулпа кашни кунах çӳрет иккен, сĕт турттарать. Хăй Ереми ятлă. Кĕçех çитмĕле çитет. Карчăкĕпе иккĕшех пурăнаççĕ. Ултă ача пулнă вĕсен, анчах халĕ ĕнтĕ пурне те ӳстерсе «йăваран вĕçтерсе кăларса янă».
Хăйсен колхозĕ çинчен те питĕ кăмăллă калаçрĕ Ереми мучи. Ăна тунă та кăна тунă, виçĕмçул кашни килех электричество, радио кĕртнĕ, пĕлтĕр кĕркунне клуб туса çитернĕ — пилĕкçĕр çын шăнăçать. Выльăх-чĕрлĕх усрамалли çурт-йĕрсем те питĕ капмар.
— Председатель вăйлă пирĕн, çавăнпа ĕçсем ăнса пыраççĕ,— терĕ старик тулли кăмăлпа.
— Хăвăр ялсемех-и?
— Хамăр ялсемех. Малтан вăл Шупашкарта пысăк вырăнта ĕçлесе пурăнатчĕ. Унтан, пĕр тăватă çул каялла, партейнăйсене ялта ĕçлеме кайма йыхăрсан, киле таврăнчĕ те пĕтĕм пурнăçа урăх майлă çавăрса хучĕ...
— Халăх юратать пуль эппин ăна?
— Ара, ун пек çынна мĕнле юратмастăн-ха? Нумай вĕреннĕскер вĕт, тем те пĕлет, хăямат! Акă, иртнĕ хĕлле клубра, пĕтĕм халăх умĕнче, пачăшкăпа тавлашрĕç вĕсем. Тискут теççĕ-и-ха çавна?
— Диспут...
— Ийййа, ийййа! Турă пирки тавлашрĕç — пур-и вăл, çук-и? Пачăшки те вĕреннĕскер, туховни академи пĕтернĕ, теççĕ. Анчах та пирĕн председатель Василь Васильч çавна наччасра месерле çавăрса хучĕ вĕт, туххăм çĕнтерсе пăрахрĕ! Лешин халăх умĕнче намăс курни çеç пулчĕ...
— Туррине ĕненекенсем нумай-и сирĕн? — ыйтрăм эпĕ, сăмах çавăнталла çаврăнса тухнă май.
— Ĕненекенсем-и?..— Ереми мучи шухăша кайнă пек пулчĕ.— Пытармалли çук, пур ĕнгĕ вĕсем, анчах та нумай мар. Сахаллансах пыраççĕ. Ăслăланать мар-и халăх!
— Сăмахран, эсĕ ху мĕнле? Ĕненетĕн-и турă пуррине? — унăн куçĕнчен пăхса илтĕм эпĕ.
— Менле калас сана... Ĕлĕкрех ĕненеттĕм те пулмалла, анчах мана турра ĕненме хăйсем пăрахтарчĕç вĕсем,— терĕ те Ереми мучи ман çине темле куларах, чеерех[illegible] пăхса илчĕ.
— Камсем?

4-43485

— Чиркӳ тавраш̆есем ара...
— Мӗнле майпа?
— Кулӑшла пулчӗ вӑл. Аса илсенех кулас килет...
— Каласа пар-ха эппин! Кулӑшла историсем итлеме питӗ юрататӑп эпӗ...

Калама пуҫличчен малтан Ереми мучи, кӑмӑллӑн кулкаласа, чӗлӗмне тепӗр хут чӗртсе ячӗ те аллинчи пушӑ аврипе малалла тӗллесе кӑтартрӗ мана:

— А-ав ҫавӑнта, пирӗн ял ҫумӗнчи ҫырмара, кӗпер пур. Хамӑр тунӑ кӗпер. Ытла пысӑках та мар вӑл, пӗчӗкех те мар. Чаплӑ та теме ҫук, хурлама та юрамасть,—йывӑр тиенӗ машинисене те чиперех чӑтса каҫарса ярать... Ҫапла, тӗрӗснех калатӑп... Пӗр пилӗк ҫул каялла пирӗн ялта ҫав кӗпер пирки питӗ тӗлӗнмелле сӑмах тухрӗ: ун айӗнче ангел — урӑхла каласан пирӗшти пурӑнать, теҫҫӗ! Эрнере ик-виҫ хутчен, ҫурҫӗр тӗлӗнче, ҫав чӗрчун кӗпер айӗнчен тухать тет те иртен-ҫӳренсемпе этем чӗлхипех калаҫать, унтан пач! ҫухалать, теҫҫӗ...

— Мӗн ҫинчен калаҫать тет вара? — интереслентӗм эпӗ.

— Ара,— аллипе сулчӗ Ереми мучи,— ангел тавраш̆ мӗн ҫинчен калаҫтӑр ӗнтӗ? Паллах, турӑ ҫинчен! Тӗрӗс мар пурӑнатӑр, турра манатӑр, чиркӗве ҫӳреместӗр, сирӗн ҫылӑхсем нумайлансах пыраҫҫӗ-ха, ҫавӑнпа та вилсессӗнех тамӑка лекетӗр акӑ, унта сирӗн лапӑрчӑк чунӑрсене усалсем вӗри ҫатма ҫинче шаритлеҫҫӗ, тесе калать тет, унтан тата темӗн те пӗр... Ҫавӑн пек вӑл чылай ҫынсене, пуринчен ытла хӗрарӑмсене хӑратса пӗтернӗ вӗт! Ара, айвансене хӑратса ӑнран кӑларса яма нумай кирлӗ-им?.. Хӑйсен куҫӗпех ангел кураҫҫӗ те-ха, ҫавӑн хыҫҫӑн вара, паллах, чиркӗве ҫӳреме тытӑнаҫҫӗ, ҫамкисем шыҫса тухиччenех турра пуҫҫапаҫҫӗ!

Пӗрре пулать ҫавӑн пек, иккӗ, виҫҫӗ, пиллӗк, вуннӑ... Кам эсрелли хӑтланать куна, ҫынсен ӑс-пуҫне кам пӑтраштарать? Пирӗн комсомолсем темиҫе хут та ҫӗрле ҫав кӗпер айне пытанса ларса сыхланӑ ҫакна, анчах тӗл пулайман, ахӑртнех, кам та пулин систернӗ пуль лешне... Ангел тавраш̆есен те хӑйсем майлӑ ҫынсем пур вӗт-ха!

Ну, юрӗ... Кӗр енне, ҫуртрисем вырса пӗтерсен, пӗррехинче эпӗ пасара кайсаттӑм. Унта авалтанпах палланӑ пӗр ҫынна тӗл пултӑм та, вӑл мана вӑйпах чайнӑя туртса кӗртрӗ. Ытлашши ӗҫмерӗмӗр, кӑшт чӗлхе-ҫӑвар ҫаврӑнмаллӑх кӑна сыпрӑмӑр. Ну, тен, пӑртакках пуҫа та кайнӑ пуль ҫав. Ҫапах та вӑхӑт чылай иртрӗ. Киле килме тухнӑ чухнех тӗттӗмленме пуҫланӑччӗ ӗнтӗ.

Килетӗп хайхискер. Васкамастӑп та — лашана та, пустуй ӗшентерес мар, тесе, хӑваласах каймастӑп. Юртать вӑл хӑйӗн

ҫеммипе... Хамӑн кӑмӑлӑм ҫав тери лайӑх! Хуларан тухсанах ҫӑвара темле авалхи юрӑ кӗвви пырса кӗчӗ те, ҫула тӑршшипех ҫавна сӑмса витӗр ӗнӗрлесе килтӗм... Ҫанталӑкӗ те питӗ ырӑччӗ — ӑшӑ, ҫил-мӗн ҫук, шӑп...

Ҫапла хуллен кӑлтӑртаттарса килнипех хамӑр ял патнелле сывхартӑм. Акӑ ӗнтӗ, сӑртран анса кӗпер урлӑ каҫмалла та — ҫур ҫухрӑмран кил пулать. Анчах та шӑп кӗпер ҫине пырса кӗреспе ман лаша тӑрук чарӑнса тӑрса харт! харт! турӗ те, эпӗ мӗн те пулин чухласа иличчен, пӗррех сулахаялла сиксе урапана пӑлтӑр-палтӑр! тӳнтерсе пӑрахрӗ. Лапсӑрт! тухса ӳкрӗм тусанлӑ ҫул ҫине.

Мӗн амакӗ пулчӗ ку? Камран кун пекех хӑраса сикрӗ ман лаша? Ҫул ҫинче кашкӑр тавраш курмарӗ пулӗ-ҫке?!

Ҫапла хӑрарах шухӑшласа. эпӗ йӑпӑр-япӑр сиксе тӑтӑм: Пӑхатӑп — тӗттӗмре, кӗпер карлӑкӗ ҫумӗнче, темле шурӑ пӗркенчӗкпе хупланнӑ мӗлке тӑра парать. Хайхи ангел тухса тӑнӑ иккен мана кӗтсе илме!

Ҫурӑлас пек тарӑхса кайнӑскер, эпӗ темлерен хам алӑрах юлнӑ пушша ҫӗклерӗм те тӳрех ҫав мӗлке патнелле ыткӑнтӑм.

— Кам шуйттанӗ эсӗ, мӗн туса тӑратӑн кунта?! Халех ҫапса пӑрахатӑп!..

Анчах вӑл манран питех хӑраса ӳкмерӗ пулас, сылтӑм аллине ҫӗклесе ман еннелле хӗрес хыврӗ.

— Эй, ҫылӑхлӑ ҫын, турӑ чури, лӑпкӑ пул, итле ман сӑмаха! — тет.

— Чура кӑтартӑп эп сана! — кӑшкӑрса ятӑм та ҫакӑн ҫине ҫав самантрах пушӑпа ҫурӑм урлӑ чашш! кастарса илтӗм.

— Апа-ай! Ма ҫапа-ан?! — ҫухӑрса ячӗ хайхи ман ангел. Сассинченех пит лайӑх уйӑрса илтӗм — хӗрарӑм иккен.

Эпӗ ӑна тепре ҫунтарса илес тесе татах пушӑпа сулса ятӑм, анчах лектерейменӗм, мӗншӗн тесен вӑл кӗпер ҫинелле тапса сикрӗ. Эпӗ, паллах, ун хыҫҫӑн! Темиҫе утӑмранах хуса ҫитрӗм те татах чашлаттартӑм...

— Вӗрентӗп эп сана ҫын лашисене ҫӗрле хӑратса ҫӳреме иерӗх!

Вӑл тата хытӑрах тарма тытӑнчӗ. Анчах нумай та каяймаре — ҫул ҫине кӗпсӗрт! тӑсӑлса ӳкрӗ. Чупнӑ чух леш пӗркенчӗкӗн арки ҫине пусрӗ пулмалла... Паллах, эпӗ ӑна-кӑна пӑхса тамарӑм, сиксе пытӑм та ун патне, тата хытӑрах тарӑхса кайнӑскер, ҫине-ҫине вӗтелеме тытӑнтӑм — чашш! чашш!

— Ак сана! Ак сана! Ку ман лашана хӑратса тартнӑшӑн, ку хама урапа ҫинчен ӳкернӗшӗн, ак ку акӑ халӑха улталанӑшӑн!

— Ереми мучи-и, ан вěлер! Тархасшăн, ан вěлер! Ěмěр саншăн турра кěл тăвăп! — кăшкăрма тытăнчě хайхискер.

— Суратăп сан турру çине! — терěм эпě, анчах хам хěнеме чарăнтăм.— Кала луччă. кам эсě? Кам хушрě сана çакăн пек хăтланма?

— Каласа пара-ап, пěтěмпех каласа парап... Эс ан хěне тулькиш! — хурлăхлăн йынăшса илчě çакă.— Эп ахаль те алла мăкăлтарăм пулмалла, тўсмелле мар ыратать...

— Çавă чух сана! Тăр тавай! Тăр! — терěм те эпě, ăна хамах хулěнчен тытса ура çине тăратрăм.— Ну, кам эсě?

— Ара, Ереми мучи, хамăр ялсене те палламастăн-и? — терě вăл кўреннě сасăпа.— Сар Анна-иç эпě...

Аçа çаптăр!.. Чăнах та хамăр ялти Сар Анна пулнă çавă! Чиркў валли просвир пěçерсе пурăнакан хусах матка! Малтан вăл тăват-пилěк упăшкана та çитрě, питě путсěр хěрарăмччě, унтан сасартăк чиркў çынни пулса тăчě.

— Эппин эсě-и-ха вăл çынсене çăвěпе хăратса пурăннă эсремет?! — хулпуççинчен тытса лăскаса илтěм çакна.— Мěн шутпа хăтлантăн эсě ун пек?

— Мана мěн... мана... мěн...— чěлхи çыхланса ларчě Аннан.

— Мěн сана? Кам хушрě?

— Ара, мěн... Чиркěве çынсем сахал çўреççě те...

— Пачăшкă хушрě-им?

— Пачăшкă çав... Таса чиркўшěн ырă ěç туни пулать ку. терě те... Итлемелле пулчě. Мěн тăвас-ха ěнтě...

Вăл ман умра макăрса ярас пек пěтěм кěлеткипе чěтресе тăчě.

— Ереми мучи, турă пул... Тархасшăн, кун çинчен никама та каласа ан пар! — ўкěтлеме тытăнчě хайхискер.— Ан пěтер! Эп сана укçа та парăп, ěçтерěп, хуть те кашни кун пырса кай, ман яланах пур...

Манăн çав тери кулас килсе кайрě. Пăх-ха, çак ирсěр чěрчун мана эрехле сутăн илесшěн! Хам çамрăкрах пулнă пулсан, вăл мана тата тем те пěр сěнетчě-и тен?

— Юрě, ан йăсла! — терěм ăна.— Тупăннă ангел... тьфу! Ара, сан пек çылăхлă çын, санашкал чупкăн прихучěпе те çук вěт! Йěксěк!

— Эп хамăн çылăхсене кашни эрнерех каçарттаратăп, турра кěл тăватăп, çурта лартатăп,— тўрре тухасшăн пек пулчě Анна.

— Ан лăпăртат! — терěм ăна хирěç.— Санăн çылăхусем кашни кун телефон юпи пысăкăш çуртасем лартсан та каçса пěтес çук! Эсě миçе хутчен вăрттăн ача пăрахнисене турă пěлес

пулсан, сана вăл чиркӳрен те шăршлă шăпăрпах хăваласа кăларса ямалла хальччен!

Анна нимĕн те калаймарĕ, шурă пĕркенчĕкне çĕртен илсе хулхушшине хĕстерчĕ те ял еннелле вăркăнчĕ...

Çак кaçхине кĕпер патĕнче мĕн пулса иртни çинчен эпĕ тепĕр ирхине ирех правленине кайса каласа патăм. Ну, кулчĕç вара, ну кулчĕç!.. Хам та култăм вĕсемпе пĕрле.

Пĕр икĕ эрне хушши канăç памарĕç мана ял çыннисем. Кĕпер патĕнче ĕç мĕнлерех пулса иртни çинчен çĕнĕрен те çĕнĕрен калаттараççĕ.

— Эппин, эс ăна пушăпа, пушăпа? — теççĕ те хăйсем варĕсене тытса кулаççĕ.

— Пушăпа çав,— тетĕп,— ман ал айĕнче урăх нимĕн те пулман та!

— Ой, тĕрĕс тунă, ой тĕрĕс!..

Кĕçех тата комсомолсем стена хаçатĕнче ӳкерчĕк туса кăларчĕç: çĕр çинче Анна выртать, эп ăна пушăпа вĕтетĕп. Аяла: «Ереми мучи хамăр ялти ангела тĕне кĕртет» тесе çырнă. Питĕ ăста ӳкернĕччĕ, каламалли те çук!

Çакăн хыççăн Сар Анна пĕр çулталăк пулĕ ялйышсен куçĕ умне курăнмарĕ, ăна çавăн пек «ангел» пулса çынсене хăратма вĕрентнĕ пачăшки те пирĕн патран тухса кайрĕ. Намăса тӳсеймерĕ пулас çав...

## 3. Тĕне кĕргекене тăн кĕртни

Кун çинчен эпĕ иртнĕ кĕркунне Шупашкартан Канашалла кайнă чух илтрĕм.

Поезд пĕр пĕчĕк разъездра йăпăртлăха чарăнса тăрсан, пирĕн вакуна темле тĕлĕнмеллерех çын кĕчĕ. Хăй çине вăл вăрăмрах кăвак плащ тăхăннă, пуçĕ çинче — самаях лутăрканнă хура фетр шлепке; хĕрлĕ сухалĕ ытла пысăках мар, анчах кирлĕ чух тытса силлеме çителĕклĕ, сăмси хуран кукли манерлĕрех, çăварĕ сарлака, тутисем хулăн. Куçĕсем пирки нимĕн те калаймастăп, мĕншĕн тесен сулахайне вăл марлĕпе ним курăнми çыхса лартнăччĕ, сылтăмми кăвакăн-симĕсĕн шыçса тухнăччĕ.

Эпĕ хамăрăн купе тĕлĕнчи чӳрече умĕнче чĕлĕм туртса тăраттăм. Çав çын, хăй валли вырăн шыраса, кашни купе çинех хăрах куçĕпе чалăшшăн пăха-пăха, ман паталла çывхарчĕ.

— Мĕнле çын вар ку? — шухăшларăм эп ун çинчен.— Пуп тес — пуп мар... Ахаль çын майĕ те çук... Тата унăн куçне-пуçне мĕн пулнă-ши? Карчăкĕ ăнсăртран çатмаруççипе лектернĕши, е ĕçкĕре пĕр-пĕр пуçани тăхăнтартса янă?

Кĕçех вăл ман тĕле çитрĕ те, пирĕн купенелле пăхса:

— Кунта та пушă вырăн çук-ши? — тесе ыйтрĕ.

Ну, сасси вара! Ăçтан кăна пулать пулĕ этемĕн çакăн пек сасă!.. Сасă мар — труба! Духовой оркестрти чăн пысăк трубаран тухакан сасă та кунтан çинçерех пулĕ!.. Çынни лăпкăн çеç ыйтрĕ вĕт-ха, кăшкăрса-туса мар, апла пулин те, ун сасси пĕтĕм вакунĕпе кĕрлесе кайрĕ. Енчен те, ку çын кăштах сыпса, хăйĕн ўпкин пĕтĕм вăйĕпе кăшкăрса юрласа ярсан мĕн пулĕ-ши? Пурне те хăлхасăр туса лартать пуль çав, тупата!

Çак шухăшсем ман кукша пуçăмра çиçĕм пек хăвăрт çиçсе илчĕç, çав хушăрах эпĕ ăна:

— Вырăн пур унта, пур, кĕрсе ларăр,— терĕм.

— Тавтапуç, дорогой тавариш,— каллех мĕкĕрсе илчĕ вăл, ман еннелле пуç тайса.

«Тавариш» текенскер, ку пуп пулма кирлĕ мар...» — шухăшларăм хам ăшăмра.

Хайхискер, купене кĕрсе чўрече патнерех вырнаçса ларчĕ те хашш! сывласа ячĕ. Этем тени çакăн пек хăватлăн сывланине ку таранччен те илтменччĕ...

— Вăт, пулать те иккен ўпке! Тимĕрç лаççинчи вĕркĕч вĕт ку! — ирĕксĕрех ăмсанса илтĕм эпĕ.

Поезд вырăнтан хускалса малалла ыткăнчĕ, эпĕ те хамăн вырăна. çўлти нар çине хăпарса выртрăм та çак çынна хăй сисмелле мар сăнама тытăнтăм. Вăл сулахай куçне çыхнине тўрлетрĕ, унтан çумĕнчи сăран сумкинчен чўрече умĕнчи пĕчĕк сĕтел çине пĕр чĕрĕк эрех, шаритленĕ çур кăвакал тата çур çăкăр кăларса хучĕ те апатланма тытăнчĕ. Тĕлĕнмелле вăйлă апатланчĕ вăл! Чĕрĕкне пĕррех кутĕнчен çапса уçрĕ те анинченех ĕçсе ячĕ, унтан хăрах аллине тем пысăкăш çăкăр чĕлли, теприне — çур кăвакалăн çуррине тытса çавăрттарма тапратрĕ. Эх, çиет, эх, çиет çав, виçĕ çул ним çимен пек!

Çирĕ-çирĕ те — юлашкинчен какăрчĕ. Каçарăр мана, анчах вăл мĕнле какăрнине нимĕнпе те танлаштарса параймастăп. Ун йышши сасă эпĕ çĕр çинче аллă çул пурăнса та илтмен!

Вăл какăрнинчен хăрасах пулас, ман айри нар çинче çывăракан ватăрах çын тăпăл-тапăл! сиксе тăрса ларчĕ те куçĕсене сăтăркаласа илчĕ. Кам пĕлет, тен ăна çак самантра хамăр ларса пыракан вакун тăрук арканса кайнă пек туйăннă-и?..

Ана-кăна пĕлместĕп, анчах çав ыйхăран вăраннă çын леш çынни, какăраканни çине, хăй умне упа килсе ларнă пекех тĕлĕнсе пăхма тытăнчĕ. Татах куçĕсене чышкисемпе сăтăрса илчĕ. Çав вăхăтра лешĕ те ăна хăрах куçĕпе шăтарас пек пăхрĕ.

— Чим-ха, чим-ха...— терĕ юлашкинчен ыйхăран вăранни,— эсĕ... эсĕ, ăнсăртран, Мамун Петровччă мар-и? Панкрутов юлташ мар-и эсĕ?

— Чӑн-чӑн ҫавӑ,— пуҫӗпе сулса илчӗ хӑрах куҫли,—анчах эсӗ ху кам пулатӑн-ха? Тем, уйӑрсах илейместӗп-ха эп сана. Манӑн халӗ куҫӗсем те ҫавӑн пекрех те-ха...

— Ара, эпӗ Хураҫкин вӗт! Хураҫкин! Илля Иллич! Неушлӗ паллаймастӑн?! Асту-ха, Канашри ҫӑмарта складӗнче пӗрле ӗҫлерӗмӗр! Эсӗ заведующи пултӑн, эпӗ санӑн складовщикчӗ. Питӗ лайӑх пурӑнсаттӑмӑр эпир, анчах кайран пире...

— Ҫапла, ҫапла! — мӗкӗрчӗ ӑна хирӗҫ Мамун Петрович,— кайран пире иксӗмӗре те хыҫран тапса кӑларса ячӗҫ...

— Анчах эпир санпа нимӗн чухлӗ те айӑплӑ марччӗ! — аллине кӑкрине ҫапса илчӗ Хураҫкин.

— Ҫапла, ҫапла! — каллех мӗкӗрчӗ хӑрах куҫли.— Пирӗн нимӗнле айӑп та пулман, сасартӑк пырса ревизи тусан вӑтӑр пин ҫӑмарта тухмарӗ кӑна...

Авалхи туссем хӑйсен ӗлӗкхи пурнӑҫӗнчен тем те пӗр аса илме пуҫларӗҫ. Шутсӑр лайӑх пурӑннӑ иккен вӗсем, ҫав тери ыр курнӑ! Чӑх ҫӑмарти пысӑк япала мар пулин те, вӗсем иккӗшӗ те ҫӑмарта ҫине ҫӑмарта купаласах Канашра ҫуртсем лартнӑ-мӗн, анчах кайран вӑл ҫуртсем хула Совечӗ аллине куҫнӑ... Туссем те нумай пулнӑ вӗсен, ӗҫкӗ-ҫикӗ тусан ниҫта шӑнӑҫса пӗтмен, анчах кайран, кусене суда парсан, таракансем пекех тарса саланнӑ...

Хӑйне ӗлӗк нумай ыр тунӑ ҫынна тӗл пулнӑшӑн савӑнса ирӗлсех кайнӑ Хураҫкин, Ҫӗрпӳре чупса тухса ҫур литр илсе кӗчӗ, вара вӗсен калаҫӑвӗ татах ӑнса кайрӗ. Музыкантсен чӗлхипе каласан, Хураҫкинӗ балалайка пек тӑнкӑртатрӗ, Панкрутовӗ контробас пек кӗрлерӗ.

Вӗсем мӗн-мӗн ҫинчен калаҫнине ҫырса та пӗтерес ҫук. Тата вӑл кирлӗ те мар. Анчах вӗсен калӑҫӑвӗн пӗр сыпӑкне ниепле те пӑрахса хӑварма ҫук... Темӗн те пӗр аса илнӗ, такама та асӑннӑ, хӑйсем халь ӑҫта, мӗн туса пурӑнни ҫинчен пӗлнӗ хыҫҫӑн (иккӗшӗ те тӑван ялӗсенчех пурӑнаҫҫӗ, нимӗнле «должнӑҫра та тӑмаҫҫӗ» иккен) И. И. Хураҫкин хӑйӗн авалхи пуҫлӑхӗнчен именнӗ пекрех пулса, хӑюсӑртараххӑн калаҫма пуҫларӗ:

— Мамун Петровччӑ! Эс каҫар та-ха... анчах санӑн питкуҫу тӗлӗнтерет-ха мана. Мӗн пулчӗ капла? Эп астӑвасса, эсӗ ҫапӑҫса-ҫӗмрӗлсе ҫӳрекен ҫын та марччӗ... Э? Кам кун пекех пӑсса хучӗ санӑн патретна?

Ответ вырӑнне Панкрутов паҫӑрхи пекех хашш! сывласа ячӗ те, унӑн сывлӑшӗ пырса ҫапнипе сӗтел ҫинчи эрех кӗленчи те ташласа илчӗ.

— Кулмастӑн-и? — ыйтрӗ унтан Панкрутов.

— Ай-уй, Мамун Петровчӑ, ан тӗлӗнтер-ха! — хӑранӑ пек-

ҫех пулче Хураҫкин.— Кун пеккине курсан, кулма мар — макăрса ямалла-иҫ!

— Турра ĕненекенсем ҫакăн пек юсаса ячĕҫ мана,— сăмса витĕр нăрлатса илчĕ Панкрутов.— Православнăй халăх илемлетрĕ. Христос тĕнĕшĕн асап курма тиврĕ...

— Ан шӳтле-ха эсĕ! Мĕнле майпа?! — сак ҫинчен сиксе тăчĕ Хураҫкин.— Пулма пултараймасть!..

— Пирĕн ҫылăхлă ҫĕр ҫинче тем те пулма пултарать, тусăм.

— Вăл ҫапла-ха, вăл тĕрĕс,— килĕшме васкарĕ Хураҫкин,— анчах эсĕ Христос тĕнĕшĕн асап куртăм, тетĕн те-ха... Эпĕ ку таранччен пĕлнĕ тăрăх, эсĕ... чиркӳ ҫынни, пуп тавраш мар вĕт-ха? Е... хе-хе-хе...

— Чутах архимандрита тухаттăм! — аллипе сулчĕ те Панкрутов хăй те кулса ячĕ.

— Нимĕн те ăнланмастăп! — пĕҫҫине шарт! ҫапрĕ Хураҫкин.

— Ничево, халех ăнланатăн акă. Итле,— терĕ Панкрутов, тепĕр ҫур стакан ярса ĕҫсе.

Хураҫкин сĕтел патнерех шуса итлеме хатĕрленсе ларчĕ. «Хăлхисене чăнк! тăратрĕ», теҫҫĕ ун пек чух. Эпĕ те, ҫӳлте ним чĕнмесĕр выртаканскер, Панкрутов калавне тимлесех итлес-ха, терĕм...

— Ĕҫĕ ҫапла пуҫланчĕ,— терĕ вăл, эрех хыҫҫăн ĕмнĕ пулă хӳрине аяккалла ывăтса.— Пĕлтĕр-виҫĕмҫулхи пекех эпĕ кăҫал та ялйышсенчен йӳнĕ хакпа пĕр вакун паранкă пухрăм та Атăл тăрăх анаталла кайса килтĕм. Питĕ лайăх кайса килтĕм, тес пулать. Укҫа — пĕр чăпта. Таврăнтăм та — яла тĕлĕнтермелле ĕҫкĕ тума шутларăм. Утмăл ҫул тултартăм-ҫке кăҫал! Тăванхурăнташсене ҫеҫ мар, кăшт палланăрах ҫынсене те чĕнтĕм — асăнччăр пĕрре! Виҫĕ кун тĕпĕртетрĕҫ, аран-аран саланкаласа пĕтрĕҫ. Тăваттăмĕш кун ирхине те пурччĕ-ха темиҫе ҫын, чăн инҫетрен килнисем. Анчах мухмăр уҫмалли нимĕн те юлман иккен — пĕтĕмпех типĕтнĕ! Лавккана чуптартăм — питĕрнĕ, продавщикĕ района кайнă, каҫсăр пулмасть, терĕҫ. Мĕн тăвас? Хамăн та ĕнтĕ пуҫ ҫурăлса тухать... Ҫиччас, терĕм хăнасене, Юманлăха кайса килетĕп. Пирĕн ялсем хушши инҫе мар — пулсан пулĕ пĕр тăватă ҫухрăм. Халь ҫеҫ илсе килнĕ ак ҫак ҫĕнĕ плаща тăхăнтăм, пуҫ тăрне шлепке лартса ятăм (унччен эпĕ нихҫан та шлепке тавраш тăхăнман), чăматан йăтрăм та тухса танккарăм... Юманлăха ҫитетĕп — унта та хупă, продавщик районра, теҫҫĕ. Канашлу иккен вĕсен! Анчах манăн ниепле те пуш алăпа таврăнма юрамасть. Тытрăм та — тепĕр пилĕк ҫухрăмри яла, Кăвапакассине уттара патăм. Ку ял — пирĕн район мар, ҫавăнпа та продавщик килтех пулмалла-ха, тетĕп. Чăнах та, уҫă иккен лавкки, мана кирлĕ таварĕ те тем чухлех.

Чăматана тултартăм та хамăн ăш хыпсах тухнă пирки тепĕр чĕрĕк илсе çавăнтах тӳнтерсе хутăм. Пурнăç тӳрех лайăхланчĕ манăн, юрлас килсех кайрĕ. Урасем те çăмăлланчĕç. Пĕр ял витĕр тухрăм, тепĕр ял витĕр. Виççĕмĕшĕнче, çырмари çăл тĕлĕпе иртсе пынă чух, мана сасартăк икĕ карчăк чарса тăратрĕç.

— Итле-ха, ырă çын, эсĕ пачăшкă мар-и? — тесе ыйтаççĕ.

Ним шутламасăр-тумасăр, кайран-малтан мĕн пулассине чухламасăр, шӳтле пек, мĕн пек, çаксене хирĕç: «Пачăшкă-çке!» тесе пер яр! Нумай та пулмасть лавккара ĕçсе тухнă чĕрĕк салтса ячĕ пулас çав ман чĕлхене! Карчăксем картлă кĕвентисене пăрахсах калаçма тытăнчĕç вара манпа...

— Илтнĕччĕ çав эпир, Çĕнъял чиркӳне çĕнĕ пачăшкă килмелле, тетчĕç. Эппин эсĕ-ха вăл?

— Эпĕ,— тетĕп.

— Ах, пачăшкă, пирĕн пĕр ĕç пур та... Те ерçетĕн эсĕ, те ерçейместĕн ĕнтĕ...

— Сирĕн кам та пулин вилнĕ-им? Вилнĕ пулсан — тăпри çăмăл пултăр, çылăхлă чунĕ çӳлти патшалăха лектĕр! — терĕм те хам çавăнтах вăшт-вашт сăхсăханçи туса илтĕм.

— Çук-çук, пачăшкă, вилмен, çуралнă! — терĕç карчăксем.— Пирĕн иксĕмĕрĕн те мăнуксем çуралчĕç...

— Питĕ аван ку! Вара мĕн-ха?

— Ара, вĕсене тĕне кĕртмен-çке! Чиркӳ йĕркипе ят хуман, çавă чуна ыраттарать пирĕнне! Ашшĕ-амăшĕсем, ну, пирĕн ывăлсемпе кинсем ĕнтĕ, туррине питех ĕненмеççĕ те ачисене ним тусан та чиркĕве парса ямаççĕ-çке... Çавăнпа та эпир ку ĕçе епле пулсан та килтех майлаштарасшăн та... Пулăшмăн-ши пире, пачăшкă?

Чухлатăн-и, Илля Иллич, ĕçсем ăçталла çаврăнса кайма пуçларĕç? Малтан эпĕ, хайсем ыйтнăран, шӳтлесе калаçрăм, анчах халĕ чăн-чăн пупах пулма пуçларăм вĕт! Манăн вĕсене: «Ухмахсем эсир, мăйракаллă шуйттана пупран уйăрса илме пултараймастăр», тесе, уттара памаллаччĕ, анчах ман ăшри шуйттанĕ — леш чĕрĕкĕ — тата ытларах йĕкĕлтерĕ пулмалла çав! Итлемелле марччĕ ăна, анчах вăхăчĕ иртсен мĕн тăвас-ха?

— Тарха-асшăн, пачăшкă! Чăрмав пулсан та, ыр туса хăвар ĕнтĕ пире... Эпир сана уншăн ахаль тумăпăр, чиркӳри хакпах тӳлесе ярăпăр, ытларах та парăпăр...— йăлăнма тытăнчĕç хайхи кинемейсем. Хăйсем ман çине çветтуй турăш çине пăхнă пекех пăхаççĕ, пĕри ик-виç хут сăхсăхса та илчĕ.

Э, мĕн пулать, мĕн килет, мăшкăллас-ха пĕрре ку ухмахсенчен, кайран кулса пурăнмалăх пултăр! — терĕм вара. Тепĕр тесен, ачана хуранти шыва хуть пуп чиксе кăлартăр, хуть эп

чиксе кăларам — вĕсемшĕн пурĕ-пĕр мар-им? Тата лешсем те ман пекех шарлатансем мар-им? Пĕр çĕр çинчех çӳретпĕр, пĕр йышши эрехех ĕçетпĕр-иç? Карчăксен те кăмăлĕ тулать, хамăн та пĕрре мухмăр уçмалăх укçа пулать!

— Акă мĕн, инкесем,— терĕм хайхисене,— манăн халĕ чăнах та вăхăт çук, питĕ шутсăр васкатăп, анчах сире те кӳрентерес килмест... Тĕне кĕртсе паратăп сирĕн мăнукăрсене!

— Сăпаççипах, пачăшкă, ырă кăмăлушăн, сăпаççипах! — каллех сăхсăхса илчĕ пĕри.

— Анчах та ку ĕçе питĕ хăвăрт тăвас пулать. Тата... вăрттăнтарах вырăн кирлĕ, мĕншĕн тесен халь пире килтен киле çӳресе тĕне кĕртме чарнă. Чиркӳре çеç кĕртмелле, теççĕ. Эсир хăвăр тархасланăшăн кăна йĕркене пăсатăп, ăнланатăр-и?

— Ăнланмасăр ара, пачăшкă, эпир ухмахсем мар вĕт!

— Вырăнĕ пирки ан пăшăрхан, ăна халех тупăпăр, никам та курмĕ, никам та илтмĕ...—пакăлтатса илчĕç карчăксем.

Тепĕр пилĕк минутранах вĕсем мана пысăк сад çумĕнчи çĕнĕ пӳрте илсе кĕртрĕç. Пуп пулса тăнă май, эпĕ пӳрте кĕрсенех: «Çак киле ĕмĕр-ĕмĕр турă сыхласа усратăр», тесе хĕрес хурса илтĕм.

— Ĕçне тума мĕн-мĕн кирлĕ пулать-ши, пачăшкă? — ыйтрĕ пĕр карчăкĕ, ман çине пăхса тек сăхсăхаканни. Вăл çак кил хуçи пулнă.

— Эсир мĕн, çак таранччен пурăнса та ача тĕне кĕртсе курман-и? — кăмăлсăрланнă пек пултăм эпĕ.— Така хуранĕ пур-и сирĕн?

— Пур.

— Ăшăрах шыв пур-и?

— Пур.

— Урăх нимĕн те кирлĕ мар. Хатĕрлĕр часрах, каларăм вĕт-ха — васкатăп эпĕ!

— Чиччас, чиччас, пачăшкă!

Карчăксем тухса вăркăнчĕç. Эпĕ, пĕччен юлнăскер, чăматанран пĕр çурлитр кăларса шап! уçрăм та пĕр тăват-пилĕк хут ĕмсе илтĕм. Ĕçе тытăнатăп-çке, вăй кирлĕ мана! Хамăн ниçта кайса кĕмелле мар кулас килет: мĕн хăтланкалăп-ха эпĕ? Ача тĕне кĕртнĕ чух пупсем мĕнле сăмахсем каланине ним астумастăп!

Анчах манăн шухăшласа тăма вăхăчĕ пулмарĕ. Кил хуçи карчăкĕ çурри таран шыв тултарнă така хуранĕ йăтса та кĕчĕ.

— Ăçта лартас, пачăшкă?

— Акă, турă кĕтессине, сĕтел çине!

— Урăх ним те кирлĕ мар-и эппин?

— Каларăм-çке! Тавайăр ачисене, ăçта вĕсем?

— Чиччас, чиччас...

Карчăк каллех тухса чупрĕ. Эпĕ малтан шлепкепе плаща хывса хурас, тесеттĕм, анчах ку шухăша çавăнтах пăрахрăм, мĕншĕн тесен вĕсене хывсан манăн пĕтĕм пуп тĕсĕ каять: çӳç те кĕске, брюки те галифе... Пултăрах, терĕм вара, вĕсем пурпĕрех нимĕн те ăнланмаççĕ вĕт!

Кĕç урамран хайхи карчăк икĕ ача илсе кĕчĕ: пĕрине çĕкленĕ, теприне çавăтнă.

— Çаксене иккĕшне те кĕртесчĕ,— терĕ вăл, хашкаса.— Тĕне кĕмесĕрех çитĕнеççĕ вĕт, эсреметсем!

— Хывăнтар! — команда патăм эпĕ.— Халех Христос тĕнне паратпăр эпир вĕсене!..

Карчăк пĕчĕккине сак çине тăратса вăшт кăна кĕпине хывса илчĕ. (Йĕмми çукчĕ унăн). Ача нăшăклама тытăнчĕ.

— Ан макăр, ачам, ан макăр,— ӳкĕтлерĕ ăна карчăк,—пуп мучу сана нимĕн те тумасть, вăл сана чăпăл кĕртет çеç... Пуп мучу ла-айăх çын вăл... Ыран сана канфе-ет илсе парăп...

Анчах та ачана ман пата илсе пырсан, вăл хăйне сасартăк йĕппе тирнĕ пекех ал-урипе тапкаланса çухăрса ячĕ. Хытăран хытă, хытăран хытă! Манăн ăна-кăна пăхса тăмалла пулмарĕ, эпĕ часрах: «Рождество твое христе-бо-оже на-аш!» тесе юрласа ятăм та, ачана виçĕ хутчен хурана чиксе кăлартăм.

— Ашшĕпе ывăлĕ, святой сывлăшĕ ячĕпе — аминь! Ме, тыт, пулчĕ! — терĕм те унтан чыхăнса кайнă ачана карчăка каялла патăм.

— Ятне каламарăн-çке эсĕ, пачăшкă? — иккĕленерех ыйтрĕ вăл.

— Вăл не обязательнă!—терĕм ăна хирĕç.—Тавай теприне!

Карчăк алăк патĕнче тăракан куçне-пуçне чарса пăрахнă арçын ача патнелле утрĕ, анчах лешĕ пĕррех çенĕкелле тапса сикрĕ. Карчăк — ун хыççăн. Çенĕкре тĕпĕртетни, кĕрешни, унтан ача шари! кăшкăрса яни илтĕнчĕ, анчах самантранах карчăк ăна кутăн çĕклесе кĕчĕ.

— Эсрелĕ ачи! Çыртать тата! — хыçĕнчен нач, нач! тутарса илчĕ те вăл ăна, сак çине пăрахса кĕпи-йĕмне хывма тытăнчĕ. Ачи — пĕр улттăсене çитнĕскер — этем майсăр тапкаланчĕ, кукамăшне çапрĕ, тапрĕ, чышрĕ, çыртрĕ...

— Ан тив мана-а! Чăпăл тутармастăп эпĕ-ĕ! Апия кала-ап! — çухăрчĕ хăй.

Ĕç вăраха кайма пултарнине кура, эпĕ вĕсем патне пырса ача аллисене каялла пăрса лартрăм, карчăк вара тинех унăн йĕмне хывса илчĕ. Çакăн хыççăн пĕр самант та тăхтамасăр, эпĕ ачана хăпăл-хапăл çĕклерĕм те хурана чикме тăтăм.

анчах та вăл, мошельник, икĕ аллипе те пĕр харăсах мана сухалтан ярса тытрĕ.

— Апия кала-ап! — çухăрать хăй.

— Яр сухала! — тетĕп.— Яр сухала!

Ямасть! Пĕчĕк пӳрнисене хурçăран тунă, тейĕн!

— Яр теççĕ сана, хулиган эдăкки! Асту эп сана!..

Çаплах ямасть! Ирĕксĕрех каçанĕнчен паркаласа илмелле пулчĕ. Тин вĕçертрĕ сухала. Тарăхнипе вара эп ăна хурана пуçхĕрлĕ чике-чике кăлартăм. Анчах кунта та сăтăр туса илчĕ шуйттан çури: виççĕмĕш хут чикнĕ чух пуçне трук аяккалла пăрчĕ те, хуран пĕррех урайнелле вăркăнчĕ, шывĕ тăкăнса кайрĕ...

— У-у, вилменскер! — çӳçĕнчен тытса лăскаса илчĕ ачана кукамăшĕ. Ачи вара, кĕпи-йĕмне тăхăнмасăрах, пӳртрен пуля пек тухса сирпĕнчĕ...

Çав вăхăтрах тепĕр карчăкĕ икĕ пĕчĕк ача йăтса пырса кĕчĕ — иккĕшĕ те хуп-хура та кăп-кăтра, пуçĕсене каракульпе витнĕ, тейĕн.

— Йĕкĕрешсем-ха вĕсем пирĕн,— терĕ карчăк, иманнĕ пек пулса.

— А маншăн пурĕ-пĕр, хуть те пиллĕкĕн пĕр харăс çуралнă пулччăр,— терĕм ăна хирĕç.

Кусемпе чăрмавах пулмарĕ, рас-рас анчах чике-чике кăлартăм хурана. Макăрса яма та ĕлкĕреймерĕç.

— Халь ĕнтĕ каяс пулать манăн, килте кĕтекенсем пур! — терĕм çакăн хыççăн.

— Мĕн чухлĕ парас пулать-ха сана, пачăшкă? — ыйтрĕ кил хуçи, аллине хĕвне чиксе ярса.

— Сирĕнтен хаклă илместĕп, кашни ачишĕн çуршар литрлăх парсан çитет,— терĕм.— Хама сухалтан туртаканĕшĕн ытларах илмеллеччĕ те — юрĕ ĕнтĕ, каçарăп...

Карчăксем пĕр сăмахсăрах аллăшар тенкĕ кăларса пачĕç.

— Сăпаççипах сана, пачăшкă!..

— Мана мар, турра тав тăвăр,— алăпа султăм эпĕ.

Вĕсен укçине галифе кĕсйине вырнаçтарса хамăн чăматана алла тытсаттăм кăна — пӳрт алăкĕнчен шăкăрт! тата икĕ карчăк кĕрсе тăчĕç. Иккĕшĕ те пĕчĕк ачасем йăтнă.

«Ак тамаша, кусем те çав шутпах килчĕç-ши?» — хăрасах кайрăм эпĕ.— «Мĕн пулса тухать-ха капла? Лекме те пултаратăп вĕт!..»

Эп йăнăшман иккен, кусем те мăнукĕсене тĕне кĕрттересшĕн пулнă.

— Пĕрре килнĕскер, пире те ыр туса хăвар ĕнтĕ, пачăшкă...

Тархасласах ыйтаççĕ! Ним тума та çук, ирĕксĕрех тата аллă

тенкĕ ĕçлесе илмелле пулчĕ. Анчах кусемпе аппаланнă вăхăтра виççĕн тан пырса кĕчĕç вĕт! Пĕтрĕ пуç! Хăçан пушанас капла, хăçан киле çитес?

— Вăхăт çук манăн, йышăнмастăп урăх,— тесе те пăхрăм, усси пулмарĕ. Хупăрласах илчĕç, пирĕн ачасене тĕне кĕртмесĕр кăларса ямастпăр, теççĕ.

Вара тата виçĕ ачана хуранти шывра чŷхесе илтĕм, тата çитмĕл пилĕк тенкĕ пулчĕ манăн!

— Ну, урăх тытăнса тăмастăпах, ман каймалла! Сывă пулăр, турă сыхлатăр сире! — терĕм те юлашкинчен çирĕппĕн, чăматана йăтса алăк патнелле утрăм. Анчах мана хирĕç тепĕр хĕрарăм кăштăрт! кĕрсе тăчĕ. Хăйĕн çине пăхма та хăрушăччĕ — çŷçĕ-пуçĕ милкĕ пек, кĕпи çĕлесе тăхăннăранпа та шывра пулман пулĕ, кăкрисем тĕлĕнче сăранлансах ларнă, ачин питне те пĕр уйăх çуман пулмалла. Çав упăте пĕтерсе хучĕ те вара мана, вăл пырса кĕмен пулсанах нимĕн те пулмастчĕ...

— Ай-уй, пачăшкă, эс кайма хатĕрленнĕ тем? — ман çула пŷлсе тăчĕ вăл.— Чим-ха, ан васка, ман Ванькkана та тĕне кĕртсе хăвар-ха!

— Вăхăт çук, кайран, тепре килсен кĕртĕпĕр,— терĕм ăна.

— Кая юлсан, каю шăтать, теççĕ, пачăшкă! Çук ĕнтĕ, ун пек килĕшместĕп, эс ăна халех...

— Пултараймастăп, васкатăп!

— Ак ĕнтĕ тата! Çич-сакăр ачана чиксе кăларнă чух васкаман пулать те, ман Ванькка валли вăхăт юлман иккен! Юрамасть ун пек, пачăшкă... Манăн та çынсен ачисем пек ачах вĕт, эп ăна хăраххăн çуратнă пулсан та, арçынсăр туман! Какнипуть уш, э?

— Каланă сана вăхăт çук, тесе! — Эп ăна алăк патĕнчен сирсе яма тăтăм, анчах вăл вырăнтан та хускалмарĕ.

— Алăпах тивес марччĕ, пачăшкă, çынсем умĕнче аван мар ун пек! — терĕ вăл, шăлĕсене йĕрсе.— Тавлашса тăриччен эс луччă часрах ман ачана тыт та мĕн кирлине ту. Чăрмавшăн саплама укçа çукрах та, эпĕ акă сан валли вунă çăмарта илсе килтĕм... Çитет пуль? Çитменнине тепĕр чух парăп...

Вăт, шуйттан матки! Тухса кайма та памасть, çиййĕнчен мăшкăллать тата, йĕксĕк! Тарăхман вырăн юлмарĕ çав!..

— Нимĕн те тумастăп саншăн, пăрăн çул çинчен! — кăшкăрсах пăрахрăм çакна.

— Пăрăнмастăп! Ман ачана чипер тĕне кĕртмесĕр кăларса та ямастăп,— тесе хучĕ çакă.

Ытти хĕрарăмсем те (вĕсем халь улттăн-çиччĕнччĕ ĕнтĕ) ŷкĕте кĕртме тăчĕç ăна:

— Кутăнланма пăрах ĕнтĕ, Марье... Аван мар ун пек... Пачăшка паçăрахваскать...

— Эсир ан йăсласа тăрăр кунта! — пĕррех урипе тапрĕ ку.— Эп хамăнне хам пĕлетĕп! Пачăшкăна хам пата хăнана илсе кайсан та сирĕн ĕç çук, ăнлантăр-и?!

Ай-вай-вай... Ку арçурирен хăпасси пулас çук, тем те туса хурĕ, намăс та кăтартса пĕтерĕ, тавай-ха луччă мĕн ыйтнине туса парас та ырăпа тухса каяс кунтан терĕм вара.

— Хывса ил ачуна кĕпине, халех тĕне кĕртсе паратăп!

— Тахçанах çапла кирлĕччĕ, пачăшкă! — кулса ячĕ хайхискер.

Эпĕ унăн ачине хуран тĕлне тытрăм та тарăхнипе мĕн вăйăм çитнĕ таран юрласа ятăм:

— Рождество твое христе-бо-оже наш...

Çав вăхăтра пÿрте пĕр арçын кĕрсе тăчĕ. Пĕтĕмпех салтак тумĕпе, погонĕсем кăна çук. Аллине леш полевой сумка тенине тытнă.

Пĕтрĕм!.. Алари çарапакка ачана чутах çĕре ÿкереттĕм, аран-аран амăшне тыттарма ĕлкĕртĕм.

— Так, та-ак...— терĕ çав çын, малалла темиçе утăм туса.— Мĕскер-ха ĕнтĕ кунта сирĕн: чиркÿ-и, костел-и, мечет е синагога?* Мĕн тăватăр эсир кунта? — хĕрарăмсене ерипен пăхса çаврăнчĕ вăл.— Ну-ка, кил хуçи, каласа пар-ха мана тархасшăн...

— Ара, нимех те тумастпăр-ха, Якку шăллăм,— терĕ кил хуçи чĕтрекен сасăпа.

— Епле апла — нимĕн те тумастăр? Сăмахран каласан, çак така хуранĕ мĕн сăлтавпа сĕтел çине хăпарса ларнă? Ачасене тĕне кĕртетĕр?

— Ара, ачасене тĕне кĕртме саккун чармасть пуль? — хăюланчĕ кил хуçи.— Пачăшкăна тĕл пултăмăр та, чĕнсе кĕртрĕмĕр çав, чиркĕве кайса çÿреме инçе те-ха...

— Так, та-ак...— терĕ сумкăллă çын.— Тĕне кĕртме те, турра ĕненме те чаракан çук пирĕн, ку тĕрĕс. Анчах халăха улталаса çÿрекенсене пи-итĕ хытă тыткалаççĕ. Да! Ку та тĕрĕс...

Манăн чĕркуççисем лĕнчĕрех аванса анчĕç. Тытрĕ вĕт ку мана, ухмах шăши çури пекех капкăна килсе лекрĕм, мĕн тăвас?

— Сăмахран каласан, сирĕн шутпа çак гражданин — кам вăл? — ман çинелле тĕллесе кăтартрĕ сумкăллă çын.

— Кам пултăр? Пачăшкă! — терĕç хĕрарăмсем.

— Так, та-ак... Сирĕн шутпа вăл — пачăшкă? Урăхла кала-

---

* Католиксен, мусульмансен тата еврейсен чиркĕвĕсем.

сан — пуп, священник, çапла-и? Анчах ман шутпа вăл никам та мар, иртен-çӳрен рядовой жулик кăна! А ну-ка, гражданин, пĕр-пĕр документ кăтарт-ха мана! Эпĕ куна вырăнти Совет влаçĕ ячĕпе ыйтатăп. Асту, кăтартмасан эп сана халех района ăсататăп, унта сан пеккисем валли питĕ меллĕ учреждени пур — КПЗ, камера предварительного заключения, теççĕ ăна.

Ни вилĕ, ни чĕрĕ тăраканскер, эпĕ хамăн паспорта кăларса тытартăм. Ял Совет председателĕ ăна васкамасăр, пур страницисене те уçса пăхса тухрĕ. Унтан хамран ыйтрĕ:

— Ялсем тăрăх çакăн пек ачасене тĕне кĕртсе çӳреме мĕнле правасем пур санăн? Удостоверени, ордер, талон, квитанци е тата мĕн те пулин кăтарт-ха? Ну?

Манăн чĕлхе çăвар маччи çумне çыпăçса ларчĕ пулмалла...

Председатель хĕрарăмсем еннелле çврăнчĕ те:

— Ну, вот... Сирĕн умăрта чăн-чăн жулик тăрать. Нимĕнле пачăшкă та мар вăл,— терĕ.

Лешсем пĕр-пĕрин çине тăн-тан пăхкаларĕç те пăлханма пуçларĕç, куçĕсене çутăлтаркаласа илчĕç...

— Пачăшкă мар эппин вăл? — пуринчен малтан ыйтрĕ кил хуçи.

— Ёмĕрне те пулман,— терĕ председатель...

Ну, ахăрсамана пуçланса кайрĕ те вара! Председатель чарман пулсан, çавăнтах çурса тăкатчĕç пуль çав, тупата!

— У-у, йытă, намăссăр! Антихрист! Вуникĕ мăйракаллă шуйттан! Вĕриçĕлен! Явăл! Сатана ратти!..— Мĕн илтмерĕм пуль, мăнтарăн, мĕнле кăна ылханмарĕç пуль мана, аса илме хăрушă вĕт!..

Хăйсен укçисене, паллах, манран наччас тăпăлтарса илчĕç. Хамăн укçа та чылаях кайрĕ пулмалла — шутласа тăратăн-им унта? Председателе ман адреса çырса илчĕ те хамăр района пĕлтеретĕп, терĕ...

Анчах та чи хăрушши эпĕ киле кайма тăрсан пуçланчĕ. Хайхи хĕрарăмсем хăпмарĕç вĕт манран, хăйсен ялĕнчен тухичченех ăсатса ячĕç. Анчах мĕнле ăсатрĕç, тетĕн? Кам аллине мĕн лекет — çавăнпа переççĕ. Чăн малтан леш юлашкинчен пынă çыпçанкă-хĕрарăм пример кăтартрĕ, хама пама илсе пынă вунă çăмартана мана пуçран персех пĕтерчĕ вĕт, лач та лач! лач та лач! тутарать. Пĕтĕм кĕлетке тăрăх çăмарта сарри юхать! Ыттисем те вара унран юлмарĕç—хăшĕ пиçнĕ помидорпа ярать, хăшĕ çĕрĕк хăярпа, хăшĕ хытă навуспа... Унтан алтуйисемпе чулсем те хута кайрĕç, ниçтан сыхланса çитмелли çук!

— Жулик! Вăрă! Бандит! Антихрист! — тесе кăшкăрни çеç янраса тăрать хăлхара...

Тӳсме çуккипе эпĕ тарма тытăнтăм, анчах тарса ӳкетĕн-им? Хапхасем айĕнчен кашкăр пек хаяр йытăсем сиксе тухса туллама тапратрĕç, эпĕ вĕсене хирĕç алăри чăматанпа çапăç-рăм, вара ман эрех кĕленчисем пĕри те юлманччĕ, веç арканнă...

Киле таврăнсан эрне чирлесе выртрăм вĕт çавăн хыççăн. Ыратман вырăн çук! Унтан, ура çине тăрсан, тĕкĕр çине пăх-рăм та, хама хам паллаймарăм. Хай карарĕш, те арçури те шуйттан!..

— Çапла, пуп пулма пит лайăх вĕрентрĕç мана, ĕмĕрне те манас çук çав,— тесе вĕçлерĕ Мамун Петрович Панкрутов хăйĕн калавне.

— Пурнăçра тем те курма тивет мар-и, мĕн тăвас? — ăна хĕрхеннĕ пек ассăн сывласа илчĕ Хураçкин.

Эпĕ çăвара картуспа хупласа кулса выртрăм. Мĕн тумалла-ччĕ-ха тата манăн? Епле тӳсетĕн-ха кун пеккинчен кулмасăр?..

## ВАТĂЛМА МАЙĔ ÇУК...

Тăрмитун мучие кичем. Çав тери, ниçта кайса кĕмелле мар кичем! Хуть те, хăй карарĕш, халăх халапĕнчи леш аптранă кăвакалтан пример илсе, Атăл хĕррине чупса пыр та — кутăн чăм...

Пĕр уйăх каялла Тăрмитун мучи пенси çине тухрĕ. «Паха пĕкĕ» промартель членĕсем ăна чаплăн та чыслăн ăсатрĕç, тес пулать. Малтан клубра пуху пулчĕ, унта артель председателĕ Тытамаков юлташ хаваслă-савăнăçлă сăмах каларĕ, Тăрмитун мучи артельте çирĕм çул ытла счетовод-кассир пулса ĕçленĕ хушăра пĕр пус та растрата тăвайманшăн ырларĕ, унтан ăна парнесем пачĕç, черккесем çĕклерĕç, тата нумай-нумай çулсем пурăнма ырлăх-сывлăх сунчĕç. Темиçешер черкке хыççăн вара хăнасем такам пăлхатнă хур аçисем пекех какăлтатма тытăнчĕç:

— Нихçан та манмăпăр санпа пĕрле ĕçленĕ кунсене!

— Пурте сан пек ватăличченех тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурăнăпăр!..

— Тăрмитун мучие — урра-а!..

Старике кăптăр-каптăр хупăрласа илчĕç те темиçе хутчен мачча патнелле мечĕк пек ывăтрĕç.

— Çĕр çул пурăн, ан ватăл! Урра-а!..

Тепĕр кунне, пусĕ кăштах ыратнă пулин те, вăл яланхи пекех ултă сехетре тăрса ĕçе кайма хатĕрленме тытăнчĕ — артель правленийĕ тепĕр ялта, тăватă километрта пулнă, ça-вăнпа та Тăрмитун мучи, вăхăтра çитес тесе, килтен ир терех

тухнӑ. Анчах вӑл электроплитка ҫинче чей вӗретсе чӑкӑтпа пашалу ҫинӗ хыҫҫӑн пӑтари кӗрӗкне тӑхӑнма тӑрсанах, вырӑн ҫинче выртакан карчӑкӗ, Альтяк инке, ун ҫине тӗлӗнерех пӑхрӗ те:

— Тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах ӑҫта тухса каятӑн ара эс? — тесе ыйтрӗ.

Тӑрмитун мучи ӑна малти икӗ чӳрече хушшинче ҫакӑнса тӑракан куккуклӑ сехет ҫине тӗллесе кӑтартрӗ:

— Пӑх-ха, вӑхӑчӗ мӗн чухлӗ... Ҫиччӗ ҫитет-иҫ!

— Пулин,— терӗ Альтяк инке, тутлӑн анасласа илсе.

— Мӗнле «пулин» тата вӑл? Манӑн саккӑра ҫитмелле пуль? Ёҫе ӗмӗрне те кая юлса кайманскер, паян мӗн сӑлтавпа юлмалла?

— Ан шӳтле,— терӗ карчӑкӗ, тата тутлӑрах анасласа.— Вырт та тепӗр ыйхӑ ҫывӑрса ил. Питӗ лайӑх пулать...

— Эс ухмаха ермерӗн пуль те? — тӗлӗннӗ-тарӑхнӑ сасӑпа ыйтрӗ Тӑрмитун. Анчах карчӑкӗ малтанхи пекех лӑпкӑн ҫавӑрса хучӗ:

— Эп ермен-ха, анчах санӑн кӑштах сисӗнет вӑл. Каҫхине ытлашширех хутӑн ҫав. Киле мӗнле ҫитнине астӑватӑн-и?

— Питӗ лайӑх астӑватӑп. Тытамаков юлташ машинӑпах ӑсатса ячӗ. Иксӗмӗр ыталансах юрласа килтӗмӗр.

— Киле килсен мӗн хӑтлантӑн?

— Нимӗн те хӑтланман...

— Асту, хӑтланмарӑн пуль-ха. Ҫӳлӗк ҫинчен сар чӑматана туртса антартӑн та, курорта тухса каятӑп тесе, кутник сакки айне кӗрсе выртрӑн. Унтан сӗтӗрсе кӑларсан темле ухмахла такмаксем калама тытӑнтӑн!

— Мӗнле такмаксем тата?

— «Карчӑк, карчӑк, карта урлӑ, пӗҫҫи-каҫҫи...» тата темӗн те пӗр. Лапра ҫӑвар!

— Хытах кӳрентертӗм-и вара? — трук хӑранӑ пек пулчӗ старик.

— Итлемерӗм эп сана. Вырӑн ҫине пусса антартӑм та ҫывӑратса ятӑм.

Тӑрмитун мучи куҫӗсене мӑч-мӑч тутарса шухӑша кайнӑ пек пулчӗ.

— Вӑт, эсрел эрехӗ... Ҫынна чӑнах та ухмаха ертет ҫав вӑл. Тек нихҫан та ҫӑвара сыпмастӑп! — Унтан сехет ҫине пӑхрӗ те: — Ну, эп кайрӑм, Альтяк! — тесе алӑк хӑлӑпӗнчен тытрӗ.

— Аҫта каятӑн тата? — вӑртах тӑрса ларчӗ карчӑкӗ.— Мухмӑру ытлах кастарать пулсан — килтех пур, ҫӗнӗ ҫул каҫхинех пытарса лартсаттӑм пӗр чӗрӗк!

Карчăкĕ çапла калани Тăрмитун мучие йĕппе тирсе илнĕ пекех пулчĕ. Труках вĕресе кайса кăшкăрса тăкрĕ вăл:

— Мĕнле мўхмăр?! Мĕнле чĕрĕк?! Эпĕ ĕçе ĕçсе тухса кайнине хăçан куртăн эсĕ... шуйттан кĕвенти, тепре тесессĕн! Мăшкăллама шут тытрăн-и эс манран? Е санăн хăвăн ĕнерхи иртсе кайман-и? Тыт та хып эппин хăвăн чĕрĕкне! Манăн ĕçе каймалла!..

Тăрмитун мучи, тухса каяс тесе, алăка пĕррех çăматă кĕллипе тапрĕ. Анчах çав вăхăтра Альтяк инке урайне сиксе анчĕ те:

— Ан лăпăртат, ниçта та каймалла мар санăн! — тесе кăшкăрчĕ.

— Епле каймалла мар? — хаяррăн пăхрĕ ун çине упăшки.

— Ара, эсĕ ĕнер пенси çине тухрăн вĕт! Ĕçки те çавăн пирки пулчĕ! Неушлĕ çавна та манса кайрăн, ват сăс?

Тăрмитун мучи çакăн хыççăнах хăйĕн карчăкĕ çине тăй-й... пăхрĕ те, çăварне лак! карса пăрахса, кутнĕк çине шап! ларчĕ. Аллинчи туйи те урайне шăкăртах тухса ўкрĕ унăн.

— Чăнах та-çке...— хашш! сывласа ячĕ вăл юлашкинчен.

— Чăнах çав! Слущи мар ĕнтĕ эс халь, килте ларас пулать малашне! — çĕнтерўллĕ сасăпа каласа хучĕ карчăкĕ.

— Килте ларас пулать...—мăкăртатса илчĕ вара Тăрмитун.— Служащи мар... Тиража тухрăм эппин. Шапаш...

Чылайччен ларчĕ вăл урайнелле пăхса. Ниепле те ăнланаймарĕ: мĕнле-ха капла? Хĕрĕх çул ытла кашни кун ĕçе çўренĕ... Ир тăнă, апат çинĕ, тумланнă та сакăр-тăхăр сехет тĕлне вырăна çитме тухса утнă. Революци хыççăнах комбед секретарĕ пулнăранпа таçта та ĕçленĕ вăл. Чăн та ĕнтĕ, ытлашши пысăк çынах пулман, анчах хăйне шанса панă ĕçе яланах тўррĕн, таса кăмăлпа туса пынă. Çук, хăй ятне яман вăл! Уншăн ăна премисем те панă, приказсем çырса тав тунă. Анчах халĕ вара... Тĕлĕнмелле! Ир пулчĕ, часах саккăр çитет, çапах та унăн килте лармалла. Паян та ĕçе каймалла мар. Ыран та. Виçмине те... Кирек хăçан та! Мĕнле пурăнмалла-ха кун пек? Ĕçсĕр аптраса ухмахах тухса каймалла пуль? Çулла пулсан, пахчара чакаланма пулатчĕ хуть, анчах хĕлле мĕн тăвас? Пĕреххут, ма çуллаччен тăхтамарăм пуль ку пенси çине тухма!..

Чăнах та, ним тума аптрарĕ Тăрмитун мучи. Малтанхи кунсенче, хăй ĕнтĕ пенсионер пулни çинчен манса кайса, кашни ирех улттăра тăрса ĕçе тухса кайма хатĕрленчĕ, карчăкĕ асăрхаттарнă хыççăн çеç: «Тьфу, каттăршни!» тесе, пуçне тăхăннă тилĕ тир çĕлĕкне хыва-хыва ывăтрĕ, чылайран тин хăй «тиража тухнине», хăйĕн ирсерен ниçта та хускалса тухмалла маррине майĕпе хăнăхма пуçларĕ.

Тĕнчери тӳрĕ чунлă пур счетовод-кассирсем пекех Тăрмитун мучи питĕ тирпейлĕ, йĕркеллĕ пурăнакан çын пулнă. унăн нихçан та нимĕн те сая кайман, кашни япала хăй вырăнĕнче выртнă. Сăмахран, вăл кашни çĕнĕ çул умĕн илсе куккуклă сехет айне çакакан «татмалли календарь» листисене нихçан та татман, вĕсене çӳлелле çавăрса хунă çеç, декабрĕн 31-мĕшĕнче вара ăна хаçатпа чĕркесе шкапа вырнаçтарнă та ун вырăнне çĕннине çакса янă. Çав календарьсем унăн пĕр вунă çулшăн пухăннă...

Карчăкĕ пĕррехинче ăна: «Мĕн мурĕ тума пухса усратăн çав кивĕ ăпăр-тапăра, пустуех вырăн йышăнса выртаççĕ вĕт!» тесен, Тăрмитун мучи лăпкăн çеç ответ панă:

— Выртĕçин! Вĕсем çăкăр ыйтмаççĕ, анчах кирлĕ кунта кирлĕ те пулма пултараççĕ,— тенĕ.

Чăнах та, кирлĕ пулчĕç хайхискерсем! Пенсине тухнă хыççăн ĕççĕр аптраса, тунсăхласа, кичемленсе çитсен, Тăрмитун мучи пĕррехинче шкапа уçса пăхрĕ те хаклă супăнь муклашкисем пек чĕркесе хунă календарьсене курах кайрĕ. Ара, кусене вулама пулать-иç!.. Ан тив, вĕсене хăйсен вăхăтĕнче пĕр саспаллине те сиктермесĕр вуласа тухнă пултăр. Çĕнĕрен вулани кансĕрлет-им? Календарьте унта çав тери ăслă япаласем пур вĕт! Уйăх-çăлтăрсенчен пуçласа чăмăрла паранка епле тутлăрах пĕçерессипе таранах çыраççĕ.

Хайхискер, пĕрре вулама пуçларĕ те ик эрне ытла вуларĕ— вунă çулшăн! Ир тăрсан тӳрех календарь тытать те — лара-ать вара сак çумне пăталаса лартнă пек! Кун мĕнле иртсе кайнине те сисмест, хырăмĕ выçнине те туймасть, тейĕн. Анчах календарьсене вуласа пĕтерсен ăна каллех кичем пулса кайрĕ. Çав тери, ниçта кайса кĕмелле мар кичем. Хуть те, хăй каларĕш, кутăн кайса чăм...

— Ĕççĕр аптранипе, ĕçме ан тытăнтăрах ку! — пĕрре кăна мар шикленсе илчĕ Альтяк инке.

Анчах пăшăрханни кăлăхах пулнă. Тăрмитун мучи пенси укçине ĕçсе ярса пурăнма та, чипер сывлăхне пĕтерме те шутламан. Хăйне пенси çине ăсатнă каçхине персе супнă хыççăн вăл пĕр тумлам та ĕçмерĕ. Çав ирсĕр ĕçпе çыхланас вырăнне вăл кӳршĕ ялĕнчи библиотекăран кĕнекесем çĕклеме тытăнчĕ.

Чăн малтан вăл «Нарспи» йăтса пычĕ.

— Çак кĕнекене эпĕ хĕрĕх çул ĕлĕкрех вуланăччĕ, халĕ тепре вулас-ха,— терĕ вăл карчăкне.— Итле, сана та кăштах çутта кăларам!

— И-и, манăн çутта тухас вăхăт иртнĕ ĕнтĕ,— терĕ ăна хирĕç Альтяк инке, анчах хăй, чăлха çыхнă май, старикки

вуланине каçса кайсах итлесе ларчĕ, Нарспие ирĕксĕрлесех качча пама тытăннă тĕле çитсен ĕçлеме пăрахса макăрса та илчĕ...

— Шуйттан саманиех пулнă çав ĕлĕк! — куçлăхне хывса куçĕсене шăлчĕ вăл.

Çакăн хыççăн пĕр-икĕ эрне хушши вĕсем кашни каçах çавăн пек кĕнекесем вуласа пурăнчĕç. Унтан темшĕн-çке! Тăрмитун сасартăк вулама пăрахрĕ. Пĕр шăматкун Етĕрнене пасара кайсассăн аллаппи хулăнăш хут тĕрки илсе пычĕ те çав каçах çырма ларчĕ.

Çырать те çырать. Тем çырать! Ик каç, виç каç... Çырнă май хăй текех пăшăлтатать. Çын илтмелле мар пăшăлтатать тата — тутисем çеç хускалаççĕ. Альтяк инке юлашкинчен тӳсеймерĕ, ыйтрĕ:

— Мĕн пĕрмай пăшăлтатса ларатăн çав эс? Чĕлхе сурма вĕренместĕн пуль те?.. Мĕн çыратăн кун пекех тăрăшса?..

— Сан çинчен жалоба çыратăп-ха,— терĕ Тăрмитун мучи, куçне хĕссе илсе.

— Тьфу, чĕлхӳ çине çăпан тухтăрах! — çиленчĕ Альтяк.

Унтан Тăрмитун мучи таçта çырусем яма тытăнчĕ. Кашни эрнере вишер хут. Ванюк-почтальон хаçат илсе пырсассăнах, хулăн канвертсем тыттара-тыттара ярать. Каллех ыйтмасăр тӳсеймерĕ Альтяк инке:

— Кам мурĕ патне яратăн эс кун чухлĕ çыру?

— Хĕрсем патне,— терĕ Тăрмитун мучи.— Йăлăхрăм санпа пурăнса, çамрăкраххине тупас тетĕп...

— У, ват супнă, тăмана! Такама кирлĕ пуль эсĕ! — татах çиленсе кайрĕ карчăкĕ.

Анчах вулаканăн та пĕлес килет ĕнтĕ: мĕн çырнă-ха Тăрмитун хĕллехи вăрăм каçсенче, мĕнле çырусем янă вăл кашни эрнере виçшер хут?

Ан тĕлĕнĕр: Тăрмитун мучи сăвăсем çырнă. Çаплах ара, çаплах! Сăвăсем çырнă та Шупашкарти пур редакцисене те ярса пама тытăннă. Çын-мĕн ан систĕр, тесе, сăввисем айне хăйĕн чăн-чăн хушаматне çырман, суя ят лартса янă: «Д. Майский». Тепĕр тесен, сăвăсем айне унăн чăн хушаматне çырма аванах та пулман — унăн хушамачĕ Большеносов, чăвашла каласан — Мăн Сăмса пулнă. Поэзипе ку хушамат питех çыхăнман, ăна эсир хăвăрах чухлама тивĕç...

Вăхăт нумаях та иртмен — хайхи патне редакцисенчен ответсем килме пуçланă:

«Сăввусем начартарах. Рифмă та, ритм та çукрах. Пичетлейместпĕр. Хăвăрăн шкулти стена хаçатне çырса вĕренсе пыр».

«Сан сăввусем пиçмен-ха. Сăвă техникине пĕлместĕн. Каплипе журнала кăлараймастпăр».

Тата ытти те.

Анчах Тăрмитун мучи куншăн пуçне усман. Кӳренмен те тата, мĕншĕн тесен пĕлнĕ — редакцисенче ĕçлекенсене çинеçине купи-купипе сăвă ярса парса тăнне кăларас пулать, вара пурпĕрех пичетлеççĕ. Анчах пĕрре пичетленсен чару пулмасть вара.

Пилĕкçĕр листаллă хут стопи пĕтсен, вăл тата икĕ стопа илсе килнĕ. Почтальон пырсан пĕрер канверт мар, икшер парса яма тытăннă. Хăй ĕнтĕ, çĕрĕ-çĕрĕпе сăвă çырса ларнипе, начарлансах кайнă, Альтяк инке унăн сывлăхĕшĕн пăшăрханма пуçланă, ан çыр тесе ӳкĕте кĕртме тытăннă, анчах Тăрмитун мучи хăйне хăй: «Вперед!» тенĕ те, çырма пăрахма мар — хĕрнĕçемĕн хĕрсе пынă, вăрăмран вăрăм сăвăсем ярса пама пуçланă. Чăн-чăн поэтсем ку чухне пĕр çырма ларсан вунпилĕк-çирĕм пин йĕркерен кая çырмаççĕ, тенине илтнĕ вăл.

Юлашкинчен вара...

Юлашкинчен, тăрăшни сая кайман. Пĕр хаçатра «Çамрăксен страници» кăларнă та, унта Тăрмитун мучин икĕ сăввине пичетлесе кăларнă — кашни сакăршар йĕрке. Вĕсем айне «Д. Майский, çав-çав ялти шкул ачи», тесе çырса хунă...

Ку вара чăн-чăн çĕнтерӳ пулнă. Пысăк çĕнтерӳ. Ан тив, Тăрмитун мучие шкул ачи, тенĕ пултăр. Мĕнех вара уншăн? Сăввисем пурпĕрех унăн пулнă-çке-ха! Тепĕр тесен, ун пек каланăшăн мĕн кӳренмелли пур? Сăвă çырас енпе вăл чăнах та шкул ачи кăна пулнă-иç! Çырма пуçлакан поэт. Тин çеç палăрма пуçланă çăлтăр. Çамрăк талант!

Хăй те вăл халь шкул ачи пекех хĕпĕртесе кайнă. Хаçатра хăйĕн ятне курсан, çавăнтах ташласа илме, качака путекки пек кăрст! кăрст! сиккелеме хатĕр пулнă.

Вара тата ытларах çырма тытăннă. Тепĕр çур çултан унăн каллех икĕ сăвă тухнă. Ку çеç те мар: пурăна-киле Тăрмитун мучин пĕр сăвви «Çурхи çеçкесем» ятлă кĕнекене кĕнĕ, умсăмахра та унăн ятне асăннă: пысăк шанчăк паракан, ӳссех пыракан хăйне майлă талант, тенĕ...

Кĕркунне çитеспе Тăрмитун мучи — Д. Майский пурнăçĕнче тата пысăкрах событи пулнă: Ванюк-почтальон ăна хитре бланк çине пичетленĕ çыру пырса тыттарнă:

«Хисеплĕ Д. Майский юлташ! Эпир сана çамрăк писательсемпе поэтсен республикăри канашлăвне чĕнетпĕр...»

Ак япала, карчăк валли çăпала! Канашлăва чĕнеççĕ!..

Чăн та, малтанах çак çыру ăна кăштах хăратнă. Темиçе кун шухăшласа çӳрерĕ вăл: мĕн тăвас? Каяс-ши кунта, каяс

мар-ши? Темрен тем пулса тухмĕ-ши? Кайăн та, писательсен пуçлăхĕсем эпĕ шкул ачи маррине, кĕреçе сухаллă мучи пулнине курĕç те — калаçасшăн та пулмĕç, ватă тесе, канашлăва та кĕртмĕç, малашне пичетлеме те пăрахĕç? Халь тин çырма пăрахма пултараймастăп ĕнтĕ эпĕ, çырас килтерекен чир ытла та шала кайре...

— Э, мĕн пулать, мĕн килет! — аллипе сулчĕ те вăл юлашкинчен, Альтяк инкене аш кукли пĕçерттерсе, мунча хутса кĕнĕ хыççăн сар сухалне ик еннелле тураса уçса, автобус çулĕ çине тухса «сасăлама» тытăнчĕ...

Йышăнчĕç ăна! Канашлăва кĕртрĕç кăна мар, президиума суйласа чăн варрине кĕртсе лартрĕç. Сухалне яката-яката кăна ларчĕ вăл, мĕншĕн тесен докладчик хăйĕн докладĕнче унăн ятне те ырăпа асăнчĕ. Тепĕр кунне, ытти çамрăксемпе пĕрле, унăн сăнĕ хаçатра та тухрĕ.

«Çитмĕл иккĕри çамрăк сăваç»... тенĕччĕ ун çинчен.

Канашлу вăхăтĕнчех ăна радио валли сăвă вулаттарса çырса илчĕç.

Çапла вара, кĕтмен çĕртенех, Тăрмитун мучи иккĕмĕш хут çамрăк çын пулса тăчĕ. Халь ĕнтĕ мĕн виличченех çамрăк пулать — шанчăк паракан çамрăк поэт. Майĕ пулнă пулсан, тен, вăл комсомола та кĕнĕ пулĕччĕ. Ватăлма майĕ çук халь унăн! Ватăлас килсен те ватăлаймастăн çав...

Анчах нумаях та пулмасть писательсен союзĕнчи пĕр хаяр çын, Консультант ятлăскер, ун патне çакăн пек çыру янă, теççĕ:

«Хаклă мучи Д. Майский! Сирĕн колхозра сад пур-и? Пур пулсан, çавăнта ĕçлеме тытăн-ха эсĕ. Йывăççем ытларах ларт, улма-çырла ӳстер, уншăн сана хăвăр ялти пур стариксен мăнукĕсем те пĕтĕм чунтан тав тăвĕç. Кайран ырă кăмăлпа асăнса сăвăсем те çырĕç...»

Çав Консультант тенĕ çын питĕ тĕрĕс çырнă пек туйăнать пире.

## ТУПМАЛЛИ

Ӗненмесен — пырса курӑр . . . . . . . . 3
Епле тӳсӗн-ха кулмасӑр . . . . . . . . 7
Ватӑлма майӗ ҫук . . . . . . . . . . 32

ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ АГАКОВ

**КАК ЖЕ ТУТ НЕ РАССМЕЯТЬСЯ?**

Редактор *Г. ЕФИМОВ*

Подписано к печати 4/II 1960 г. Формат 70×108 1/32. Объем 1,712 п. л.
Тираж 3500. НТ 01285. Заказ № 118. Цена 50 коп.

**Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.**
**Гор. Чебоксары, Володарского, 5.**

*ХАКЛА ЮЛТАШСЕМ!*

*«ЯЛАВ» журнал çумĕнче уйрăм кĕнекепе чăваш писателĕсен çĕнĕ произведенийĕсем — калавсем, очерксем, сăвăсемпе поэмăсем, пьесăсем — пичетленсе тухаççĕ. «ЯЛАВ» журнал библиотеки уйăхра пĕрре тухать. Ун хакĕ çулталăка 6 тенкĕ, уйрăм номере 50 пус.*

*Хаклă юлташсем! «ЯЛАВ» БИБЛИОТЕКИНЕ «Союзпичетĕн» пур уйрăмĕсенче те е почтальонсем урлă кирек хăш уйăх валли те çырăнса илме пулать. Республика тулашĕнче пурăнакансен подписка укçине тӳрех çак адреспа куçарса ямалла:*

**Чувашская АССР,**
**г. Чебоксары,**
**Дом Связи,**
**«Союзпечать».**

*«ЯЛАВ» БИБЛИОТЕКИНЕ çитес уйăх валли çырăнса илме ан манăр!*

2.00

Хакĕ 50 пус.